www.tavanen.ru

# Тăван Ен

плюс Причебоксарье



Çутта хисеп туса

Шӳтлĕ шăнкăрав мĕнпе хăрушă
КУÇА-КУÇĂН → 5

Асфальта накладнойпа сараççĕ
ПУÇЛĂХ ПУРНĂÇĔНЧИ ПĔР КУН → 9

Руль мар, граната алăра
ÇУЛ ÇИНЧЕ → 10

№27 (106273-106274) ИЮЛĔН 12-МĔШĔ 2018 КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

ЧЫСЛАВ




А. Тихонова сăн ӳкерчĕкĕ

# Редакцири ăшă тĕл пулу

**«Тăван Ен» хаçата 2018 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма чи хастар çырăнтарнă почтальонсене июлĕн 10-мĕшĕнче редакцире чыслареç. Аса илтерер, кăçалхи апрель уйăхĕнче редакци «Чи лайăх почтальон» конкурс ирттересси çинчен пĕлтернĕччĕ. Çĕнтерӳçе унта хутшăнма заявка тăратнă почтальонсен йышĕнчен палăртнă.**

Конкурсра Елена Николаева почтальонка çĕнтерчĕ. Вăл тăрăшнипе çитес çур çулта 85 çын «Тăван Ен» хаçата илсе тăрĕ. Елена Витальевна 3 пин тенке тивĕçрĕ. Хастар почтальонка çак профессипе 10 çул ĕçлет. Апаш ял тăрăхĕнчи Эсеккасси, Паçпак, Шăнкас ялĕсенче пурăнакансем патне хаçат-журнал çитерет вăл. Çак ялсем Кӳкеç поселокĕнче вырнаçнă почта уйрăмне кĕреççĕ. Интернет пурнăçа çирĕппĕн кĕрсе вырнаçнă пулин те «Тăван Ен» хаçат хăйĕн вулаканĕсене çухатманни çинчен калать Елена Николаева. Почта уйрăмĕсенчи çырăнтару тиражĕ кăçал иртнĕ çул шайĕнчех сыхланса юлнине палăртмалла. Ишлей РайПОвĕн сутуçисем вăйлă конкурентсем пулса тăнă вĕсемшĕн. Çакă редакци альтернативлă майпа хаçата илсе тăракансен шутне ӳстерес тĕллевпе çырăнтарăва сутуçăсене те явăçтарма тĕллев лартнипе сыхăннă. Лавккасем урлă хаçат çырăнакансем кăçалхи çуркунне парнеллĕ те пулчĕç.

Иккĕмĕш вырăншăн пăхса хунă парнене, икĕ пин тенке, Марина Голованова илсе кайрĕ. Марина Валерьевна пичет кăларăмĕсене Апаш тата Туçикасси ялĕсене çитерет. Вăл «Тăван Ен» хаçата 72 çынна çырăнтарнă. Салана пĕрре çаврăнса тухма кăна унăн 4 сехет ирттерме тивет. Почтальон сумки йывăр, вĕсене вырăнтан çĕклесе илме те пурте тăрукках вăй çитерейместĕ имĕш. Çитес çулхи март уйăхĕнче вăл почтальонкăра ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул çитет. Марина Голованова Апашра çуралса ӳснĕ. Пушă вăхăт тупăнсанах алла кĕнеке тытать висĕ ача амăшĕ – вăл Шăнкас ял библиотекинче те ĕçлет. Сăмах май, унăн хĕрĕ кăçал И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУн журналистика уйрăмне вĕренме кĕме хатĕрленет.

«Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Виктория Вышинская çĕнтерӳçĕсене парнесĕр пусне тав çырăвĕсемпе те чысларĕ, почтальонсене тӳрĕ кăмăллă ĕçшĕн тав турĕ, июлĕн 8-мĕшĕнче иртнĕ професси уявĕпе – Почта ĕçченĕсен кунĕпе – саламларĕ.

«Эпир хамăр ĕçе юрататпăр. Çакăн пек паха парнесемпе хавхалантарсан пушшех те тулли вăйпа ĕçлес килет», – теççĕ почтальонсем. Редакцири ăшă тĕл пулу чей ĕçнипе вĕçленчĕ.

**КСЕНИЯ АРХИПОВА**

**ТЕ сĕнет** **«Тăван Ен» хаçата 2019 çулăн I çур çулĕнче Раççей Почти урлă илсе тăма июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен кăна йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ – 370 тенкĕ те 14 пус.Васкăр, туссем, урăх кун пек меллĕ май пулмĕ!**

## РЕСПУБЛИКĂРА

**Июлĕн 20-мĕшĕнчен республикăри аслă шкулсенче, техникумсенче, колледжсенче йышăну комиссийĕсем ĕçе пикенчĕç.**

Аслă шкулсене ППЭ кăтартăвĕсемпе вĕренме кĕрекенсен заявленийĕсене июлĕн 26-мĕшĕччен йышăнаççĕ, профессин вĕрентӳ учрежденийĕсенче вара абитуриентсемшĕн алăксем августăн 15-мĕшĕччченех уçă. Аслă шкулсенче бюджет шучĕпе вĕренмешкĕн хальлĕхе 7,4 пин заявлени йышăннă, техникумсемпе колледжсенче вара 6,3 пин, ĕç профессине илме – 800. Профессиллĕ вăтам пĕлĕве 5,4 пин çамрăк илме кăмăл тунă. Черетлĕ вĕренӳ çулĕнче профессин вăтам пĕлĕвне илме 7653 бюджет вырăнĕ уйăрнă, аслă шкулсенче 3475 бюджет вырăнĕ хатĕр. Вĕсенчен 438-шне направленипе килекенсене валли пăхса хунă.

## ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ

2018-2019 вĕренӳ çулĕнче абитуриентсен заявленийĕсене республикăри професси пĕлĕвĕ паракан **26 тата аслă пĕлӳ паракан 14 вĕрентӳ учрежденийĕсенче** йышăнаççĕ.

**2018 ÇУЛĂН 6 УЙĂХĔНЧЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХĂН ĔÇ ИНСПЕКЦИЙĔ** юридици сăпачĕсемпе предпринимательсем тĕлĕшпе ирттернĕ 124 (пĕлтĕр – 108) тĕрĕслев ĕç хӳтĕлевĕн саккунне пăснă 347 (717) тĕслĕхе çиеле кăларма май панă. Производствăри инкексене пула должноçри çынсене уголовлă майпа явап тыттарма следстви органĕсене кăçалхи çур çулта 21 (23) материал ярса панă. Шел те, ведомствăра ĕç вырăнĕнчи инкексен шучĕ ӳснине палăртаççĕ. Вилĕмпе вĕçленнисем кăçалхи 6 уйăхра пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ – 4-ран 8 таран.

*Кашни çыннăнах тăван ен пур, район çыннисен «Тăван Ен» пур*



Марина МАКОМОВА, Кӳкеç

**Хăвăн сăнна çак вырăнта курас килет-и? Хаçата алла илсе сăн ӳкерĕн те Viber, WatsApp мобильлĕ приложенисемпе (89656874459) ярса пар!**

● СТРОИТЕЛЬСТВО ТАТА ЮСАВ

**ШУПАШКАР РАЙОНӖНЧИ ШКУЛСЕНЧИ СПОРТЗАЛӖСЕНЧЕ** юсав ӗҫӗсем иртерме хатӗрленеҫҫӗ. Ҫакăн пирки пӗлтерсе патшалăх туянăвӗсен сайтне 4 тендер вырнаҫтарнă. Толиккасси шкулӗнчи спортзала тӗплӗн юсама 1056669 тенкӗ уйăрма хатӗр, Мăнал шкулне – 741758 тенкӗ, Ишек шкулне – 711438 тенкӗ, Ишек шкулӗнчи спортзал тăррине тӗплӗн юсаса ҫӗнетме – 450000 тенкӗ. Заявкăсене июлӗн 18-мӗшӗччен йышăнаҫҫӗ. Юсав ӗҫӗсене иртерме чи йӳнӗ хак сӗнекен подрядчике шанӗҫ.

● ЭКОЛОГИ

Роспотребнадзорăн республикăри управленийӗн ертӳҫи Надежда Луговская правительствăра иртнӗ канашлура хула ҫыннисен йышлă ҫăхавӗсем тăрăх тӗрӗслев иртернине пӗлтернӗ. Вăл каяш шăрши канăҫ паманнипе ҫыхăннă.

Атмосфера сывлăшӗнче аммиак тата сероводород виҫи пысăкки паллă. «Юрма» агрохолдинг тӗлӗшӗпе административлă правăна пăсни ҫинчен калакан ӗҫ пуҫарнă. Предприяти каяшсене компостламалли препаратсемпе усă курмасăр вӗсене тирпейлемелли технологие пăснă.

Кунашкал тӗрӗслев агрохолдингра Управлени кăҫалхи май-июнь уйăхӗсенче те ирттернӗччӗ. Шупашкар районӗнче каяша тăкмалли территори таврана сывлăшри аммиак виҫи юранинчен 3,6 хут пысăкраххине шăпах ун чухне тупса палăртнă. Канашлура ЧР Пуҫлăхӗ Михаил Игнатьев агрохолдингри экономика лару-тăрăвӗ ансат маррине палăртнă. Ҫӗнӗ технологисене пăхăнма укҫа-тенкӗ ҫитерейӗҫ-ши? Анчах Пуҫлăх ҫакă халăх умӗнче тӳрре тухмалли сăлтав пулмалла маррине, ăна наркăмăшлă сывлăшпа сывлаттарма юраманнине палăртнă. «Тӗрӗслев те, яваплăх та ҫирӗп пулмалла», – тенӗ Михаил Васильевич.

● ХАЛĂХ ТӖРӖСЛЕВӖ

## Опыт ҫук

Канализацин насос станцийӗ ӗҫлеменнине кура Чӗркашри Пригородная урамри 26-мӗш ҫурт ҫывăхӗнчи ача-пăча площадки хушăран утрава аса илтерет. Канализаци тытăмӗнчен юхакан шыв ăна ҫавăрса илнӗ, вырăнти ҫынсем пӗлтернӗ тăрăх вăл вӗр ҫӗнӗ чуччу, тăвайкки патне те юхса ҫитнӗ. Вырăнти хай тытăмлăх органӗшӗн юлашки вăхăтра пуҫ ыратмăш пулса тăнă станци пирки тӗрлӗ инстанцие ҫыру ҫыракан А. Романюка «Халăх тӗрӗслевӗ» порталта хурав панă.

«Хăҫан тивӗҫлӗ мерăсем йышăнӗҫ-ши ҫак канализаци тӗлӗшпе? Вăл ача-пăча площадкине те юхса кӗнӗ ӗнтӗ. Ачасем пӗр-пӗр чир-чӗр инфекцине ҫаклатасса кӗтеҫҫӗ-и?» – аптăранă ҫыру авторӗ.

Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата ҫурт-йӗрпе коммуналлă хуҫалăх министерстви Чӗркашри Пригородная урамри 26 тата 24-мӗш ҫуртсенчен шыва юхтарса кăларакан тулаш сетьсене тата канализацин насос станцине пăхса тăракан 3-мӗш позици застройщикӗпе – «Техстрой» ОООпа – ҫыхăннă. «Енчен те вăл хăйӗн тивӗҫне туллин пурнăҫламасть тесе шухăшласан эсир Республикăн патшалăх ҫурт-йӗр инспекцине ҫăхав ҫырма пултаратăр», – тенӗ хуравра. Министерствăн патшалăх строительствин надзор пайӗ умӗнче вара организаци шывпа тивӗҫтермелли тата таса мар шыва юхтарса кăлармалли тулаш сетьсене, ҫавăн пекех канализаци насос станцине ҫакăн пек объектсене пăхса тăма пысăкрах опыт пур организацие пама хальхи вăхăтра техника документацине хатӗрлени пирки пӗлтерсе тӳрре тухнă.

**Хыпарсем пулсан**
8 (83540) **2-21-88**
телефонпа шăнкăравлама пултаратăр.



# «Эсир – пире, эпир – сире»

## Сапантуй кăҫал Чăваш ҫӗрӗ ҫинче кӗрлерӗ

● УЯВ

**Шупашкар иртнӗ канмалли кунсенче ҫӗршыв шайӗнче иртекен 18-мӗш Сапантуй лапамӗ пулса тăчӗ. Тутарстанăн искусство ăстисен концерчӗ хыҫҫăн тепӗр кун вăл сумлă хăнасене кӗтрӗ.**

Уяв ӗҫлӗ тӗл пулупа пуҫланчӗ. Тутар Республикин Президенчӗ Рустам Минниханов чи малтанах «ЭКРА» НПП ОООра пулчӗ. Тутарстан ертӳҫине тата Чăваш Ен Пуҫлăхне Михаил Игнатьева кунта реле хӳтӗлевӗпе автоматика шкапӗсем пухакан цеха кăтартрӗҫ, терминалсем пуҫтаракан тата вӗсен ӗҫне сăнаса пăхакан участок ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарчӗҫ.

Чăваш тата Тутар республики экономикăн тӗрлӗ сферинче ӗҫлӗ ҫыхăнусене аталантарсах тăрать. Малашне вара кӳршӗ республикăсем электротехника кластерӗнче тата та тухăҫлăрах ӗҫлес шанăҫ ҫак тӗл пулу хыҫҫăн ҫирӗпленчӗ ҫеҫ. Чăваш предприятийӗсем Тутарстанăн энергетика комплексӗнче кирлӗ пахалăхлă продукцие сахал мар туса кăлараҫҫӗ – хăнасем ҫакна палăртрӗҫ. «Чăваш Ен пире 2 миллиард тенкӗ яхăнлăх тӗрлӗ таварпа тивӗҫтерсе тăрать. Паян эпир самана ыйтнине тивӗҫтерекен ку вăхăтри предприятисенчен пӗрне килсе куртăмăр», – терӗ Рустам Минниханов.

Хӗвел ҫӳле ҫӗкленнӗ вăхăт тӗлне вара офиациаллă делегаци Хӗрлӗ лапам патне ҫитсе пычӗ. Кунти сцена ҫинче чăваш тата тутар артисчӗсем прологсем кăтартрӗҫ. Мероприятие Чăваш Ен Пуҫлăхӗ Михаил Игнатьев, Тутарстан Республикин премьер-министрӗн ҫумӗ, Пӗтӗм тутарсен конгресӗн «Милли Шура» наци канашӗн председателӗ Василь Шайхразиев, Шупашкар хула пуҫлăхӗ Евгений Кадышев, министрсем хутшăнчӗҫ.

Сапантуя республикăна 1200 ытла артист килсе ҫитнӗччӗ. Шупашкар арбатӗнче вӗсем Чăваш Ен Пуҫлăхне тата Тутарстан президентне хапăл туса кӗтсе илчӗҫ. Михаил Игнатьев Сапантуя Чăваш ҫӗрӗ ҫинче паллă тума йышăннăшăн тав турӗ. «Тутарсем пурăнакан ялсенче пулнă чухне вӗсем хăйсен ывăл-хӗрне мӗн тери тӗрӗс воспитани пама, усă кӳмешкӗн вӗрентме пултарнинчен тӗлӗнетӗп», – терӗ Михаил Васильевич. Рустам Минниханов Чăваш Енре 34 пин тутар, Тутарстанра 116 пин чăваш пурăннине палăртрӗ. «Чăвашсем пире Сапантуй йӗркелеме пулăшрӗҫ, эпир вӗсене – Нурлат районӗнчи «Уяв» праҫникне иртермешкӗн тӗрев парăпăр – ҫакăн пек калаҫса татăлтăмăр», – Сапантуйпа саламларӗ вăл.

Хӗрлӗ лапам чăн-чăн тутар ялне ҫаврăнчӗ. Кунтах тутар культурине, пуянлăхне кăтартса паракан куравсем ӗҫлерӗҫ, тепӗр кӗтесре вăйăсен лапамӗ кӗрлесе тăчӗ. 9 тата 14 метрлă шерте-юпана парăнтарнисен хушшинче Алькешре пурăнакан 68 ҫулти Юрий Константинов чи асли пулчӗ.

**ТАТЬЯНА МАЙОРОВА**

СĂМАХ МАЙ

**Шупашкар районӗнче 44 наци ҫынни пурăнать. Чăвашсемпе вырăссем хыҫҫăн чи йышлисем – тутарсем – 251 ҫын.**

# Фельдшерсем район ҫыннисенчен кая мар кӗтеҫҫӗ

● АТАЛАНУ ҪУЛӖПЕ

**Ушнавăш шывӗ хӗрринче вырнаҫнă Чаканар ялӗнче иртнӗ ӗмӗрӗн 30-мӗш ҫулӗнчех трахомăран сыватмалли пункт уҫнă. Юлашки хут медпункта Советсен урамӗнчи 20-мӗш ҫуртра вырнаҫтарнă. Пысăк та хăтлă ҫурта Иван Шашков «Урожай» колхоза сутса Шупашкара пурăнма кайнă.**

Колхоз председателӗ А. Васильева ку ҫуртра фельдшер пункчӗ уҫма шухăшланă. Вăхăт иртнӗҫемӗн кил-ҫурт юхăнать. 1960 ҫулта хăпартнă ҫурт тайăлать, ҫумăр ҫусан маччаран шыв юхма пуҫлать, тӗп сакайӗнчен хӗлле сивӗ кӗрет. Ишек ял тăрăх пуҫлăхӗ Анатолий Максимов, ял старости Николай Самсонов тата фельдшер пулса ӗҫлекен Калерия Иванова тăрăшнипе ялта ҫӗнӗ ФАП тума йышăнаҫҫӗ. Июнӗн 5-мӗшӗнче «Арка» фирма строителӗсем ялта ҫӗнӗ ҫурт купалама пуҫларҫӗ. Бригадăра Святослав Чернов, Андрей Кудряшов, Андрей Павлов, Андрей Демьянов ҫамрăксем тăрăшса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсене Сергей Ягин бригадир ертсе пырать. Уйăх вӗҫленнӗ ҫӗре ҫӗнӗ ФАП стенисене хăпартса лартрӗҫ. Ӗҫ кал-кал пырать. Медпункта шыв тата газ кӗртмелли вырăнсене палăртса хунă. Канаш каччи Андрей Кудряшов хальхи вăхăтра ҫурта электричество кӗртме хатӗрленет.


Чаканарта


Шăмăшра

Сергей Ягин сăмахӗсем тăрăх, ҫӗнӗ медпункта июль уйăхӗнчех хута ярӗҫ. Медпункт заведующийӗ Калерия Петровна ҫурт ҫӳлелле хăпарнине пăхса савăнаймасть. «Бригада тăрăшса вăй хурать. Ҫурт кунран-кун хăпарсах пырать», – тет вăл. Чаканарсем строительсем сăмаха тытасса шанаҫҫӗ. Сиплев учрежденийӗнче хăтлă та ҫутă, ҫӗнӗ техникăпа пуянлатнă кабинетсем кӗҫех алăкӗсене уҫӗҫ. Кунта Чаканарта, Ырашпулăхра пурăнакан тата салари Мамăк фабрикинче ӗҫлекен ҫынсем хăйсен сывлăхне тӗрӗслесе тăрӗҫ тата сипленӗҫ. Калерия Петровна сиплев ӗҫӗнче пысăк квалификациллӗ специалист. Медицинăра вăл 38 ҫул вăй хурать.

Районти фельдшерпа акушер пункчӗсенче ҫамрăк специалистсем вăй хуни те савăнтарать. Шăмăшри ФАП заведующийӗ Кристина Прокопьева та кивви ҫумӗнчех ҫӗнӗ сиплев учрежденине ҫӗклекен строительство бригадине куҫ умӗнче тытать. Васкатать, кирлӗ тӗк хăтăрса та илет. Медицинăра 6 ҫул вăй хурать вăл. Ҫӗнӗ ФАП пирки ҫывăхри ял ҫыннисенчен кая мар ӗмӗтленет. Шăмăшри 378, Типҫырмари 242, Питтукассинчи 302, Янăшкассинчи 379 ҫынна сиплев учрежденийӗ ҫитес уйăхранах ку вăхăтри пахалăхлă медицина пулăшăвӗпе тивӗҫтерӗ. Ҫавăн пекех ФАПпа юнашарах Сретени чиркӗвӗ, 4 лавкка, ялти икӗ клуб, библиотека, 53 вӗренекенлӗ шкул.

Икӗ объект ҫинче те ӗҫсене августăн 20-мӗшӗччен вӗҫлеме палăртнă. Ӗлкӗрейӗҫ-ши строительсем?

**АНАТОЛИЙ ЛЕПИН, ЧАКАНАР**

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Июлĕн пĕрремĕш кунĕсен тĕлне Чăваш Енре

6700 ача

çуралнă, Шупашкар районĕнче –

292.

Абортсем пĕлтĕрхи çак тапхăрти кăтартупа танлаштарсан 500 сахалрах пулнă.

**ИЮЛĔН 9-МĔШĔНЧЕН ПУÇЛАСА 15-МĔШĔЧЧЕН** Чăваш Енре «Парнеле мана пурнăç» ятпа пĕтĕм Раççейри информаципе ăнлантару акцийĕ иртет. Ăна Çемье, юрату тата шанăçлăх кунне халалланă. Социаллă культура пуçарăвĕсен фончĕ çулсерен йĕркелекен мероприяти тĕллевĕ – хĕрарăмсене абортпа çыхăннă йывăр ыйтусем тавра тарăннăн шухăшлама хистесси. Ун шайĕнче республикăри хĕрарăмсен консультацийĕсенче юристсене, психологсене, социаллă ĕçченсене явăçтарнипе уçă алăксен кунĕсем, ача çуратса сывлăха упраса хăварасси пирки лекцисем иртеççĕ.

**РАЙАДМИНИСТРАЦИН ЯЛ ХУÇАЛĂХ ТАТА ЭКОЛОГИ ПАЙĔН ПУÇЛĂХĔН ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН** Светлана Иванова пĕлтернĕ тăрăх, муниципалитетра июнĕн 9-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăка 4809 га çинче çулнă. Çакă пĕтĕмĕшле лаптăкран 79%. Хуçалăхсенче 4027 тонна утă хатĕрленĕ (планран 61%), сенаж – 14480 тонна (планран 48%). 7 хуçалăхра тата 14 ХФХ пĕрремĕш утта çулса илнĕ. Кĕрхи культурăсем валли 1579 га лаптăк хатĕрленĕ.

Хуçалăхсем июлĕн 25-мĕшĕнче вырма ĕçĕсене тухма планлаççĕ. Патшалăх техника надзорĕн районти уйрăмĕн информацийĕпе, уй-хире тырă пуçтаракан 30 комбайн тухма хатĕр.

**Атайкасси шкулĕ туяннă çĕнĕ автобус çитес вĕренӳ çулĕнченех ачасене кунта Сархурăнтан тата Васлейкассинчен илсе çӳреме тытăнĕ. Çакăн валли ятарлă маршрут уçнă, павильон туса хунă.**

Çĕнĕ шкул автобусĕнче пассажирăн кашни вырăнĕ тĕлĕнчех чарăну пирки пĕлтермелли кнопка пур. Йăваш вестибулярлă аппаратлă ачасем ун çине ура çине тăмасăрах пусма пултараççĕ. Çакă хăрушсăрлăх тĕллевĕпе те пĕлтерĕшлĕ. Водитель вырăнне те ку вăхăт ыйтакан йĕркепе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Навигатор тата васкавлă службăсене чĕнсе илмелли кнопка пур. Маршрута ГЛОНАСС урлă сăнаса тăма пулать.

## ЯЛ ТĂРĂХĔНЧЕ



**Июль уйăхĕн саккăрмĕшĕнче «Семье, юрату тата шанăçлăх» кунне палла тума Шăнкас клубне мăшăрсем йышлăн пухăнчĕç. Кашниех хайсен пурнăçне аса илсе каласа кăтартрĕç.**

Геннадий Иванович Ивановпа Зинаида Михайловна çемйинех илер. Мăшăр пĕрле 56 çул пурăнать. Пилĕк ача çуратса ӳстерсе пурне те пурнăç çулĕ çине тăратнă, мăшăрлантарнă. Халĕ вунă мăнукĕпе, пилĕк мăнукĕн ачисемпе савăнса пурăнаççĕ. «Мĕн вăл юрату? Телей?» – тесе ыйтсан, пĕрпĕринпе алла-аллăн тытăнса çур ĕмĕр ытла пĕрле пурăннă мăшăр хуравĕ кĕскен çапла пулчĕ: «Пĕр-пĕрне шанни, ăнланни, каçарма пĕлни чăн-чăн çемье тĕрекĕ».

Мăшăрсене клуб ертӳçи Ираида Вениаминовна асăнмалăх парнесем парса савăнтарчĕ. Мăшăрсем хăйсем те пушă алăпа килмен, кашниех тутлă апат-çимĕç пĕçернĕ. Çавра сĕтел хушшине ларса пĕрпĕрне ырлăх-сывлăх, телей, юрату сунса тутлă чейпе сăйланчĕç, юрларĕç, ташларĕç, килелле тулли кăмăлпа саланчĕç телейлĕ мăшăрсем.

**РУФИНА БОРОДОВА, ШĂНКАС**

## ЯВАПЛĂХ

**Раççейĕн следстви комитечĕн республикăри следстви органĕсем Апаш салин 30 çулти çынни тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна РФ УК 318 статйин 1 пайĕпе айăплаççĕ.**

Следстви версийĕпе, кăçалхи июлĕн 4-мĕшĕнчен 5-мĕшне куçнă каç çул-йĕрпе патруль службин унăн автомобильне чарнă. «Киа Рио» рулĕ умĕнче шăпах çак арçын ларнă, анчах та вăл экипажăн саккунлă хушăвне пурнăçламан. Çакă вара патруль службишĕн арçын хĕрĕнкĕ пулни пирки тавçăрма çителĕклĕ пулнă. Пушшех те водитель чарсан медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухма та хирĕçленĕ. Ку кăна та мар. Инспекторсенчен пĕрне урипе тапнă, аллипе темиçе хутчен та çапнă. Усал шутлă арçынна лăплантарма май килнĕ. Ку ĕç-пуçа халĕ миравай суд уçăмлатать.

## УСАЛ ХЫПАР

**Çемьери килĕшӳлĕх унта эрех-сăрапа туслашнă самантран чăл та пар арканать. Участковăйсем, полици ĕçченĕсем ĕçкĕ авăрне лекнĕ кашни кил пирки пĕлеççĕ. Анчах та асăрхаттарса та, явап тыттарса та, ятласа та, шел те, пурин пурнăçне те çăлса хăвараймастăн.**

Иртнĕ эрнере Шупашкар районĕн тĕп больницин реанимаци уйрăмĕнче 39 çулти хĕрарăм пурнăçĕ татăлнă. Çакăнчен маларах вăл Кӳкеçре, хăйсен хваттерĕнче, мăшăрĕпе пĕрле эрех ĕçнĕ. Пурте наркăмăшланнă тесе шухăшланă, анчах та судпа медицина экспертизи хĕрарăмăн талакĕ çурăлса кайнине уçăмлатнă. Çакăн пирки Шупашкар район прокуратури пĕлтерет. Вара тин хĕрарăма хăйĕнчен вунă çул аслăрах мăшăрĕ хĕнени пирки аса илнĕ. Прокуратурăра арçын РФ УК 116 статйипе унчче те айăпланнине палăртрĕç. Халĕ каллех суд сакки çине ларма тивĕ. Йĕплĕ хӳме леш енчен таврăнĕ те – каçаракан пулмĕ.

# «Эпĕ купăс калатăп, мăшăр юрлать, ташлать»

### Акă мĕнле пурăнмалла чăн-чăн çемьен!

## КАЛЕНДАРЬТИ КУН

**Эрнекун, июлĕн 6-мĕшĕнче Кăшавăшри культура çуртĕнче Çемье, юрату тата шанăçлăх кунне паллă турĕç. Уяв çамрăк пулин те унăн хăйĕн йăли-йĕрки те çирĕпленсе ĕлкĕрнĕ. Çак кун Петрпа Феврония Муромскийсене – православи тĕнне ĕненекенсем пурте сума сăвакан мăшăра – тĕслĕх вырăнне хурса чылай çул пĕрле килĕштерсе пурăнакан çемьесене чысларĕç.**



А. Тихонова сăн ӳкерчĕкĕ

Геральдпа Таисия Иссаковсем

Шап-шурă чечек çыххисемпе илемлетнĕ сцена çинчен мăшăрсене уявпа райадминистраци пуçлăхĕ Владимир Димитриев тата Кăшавăш ял тăрăх пуçлăхĕ Сергей Мульдияров саламларĕç. Владимир Павлович пурне те сывлăх, телей, пурнăç çулĕпе алла-аллăн тытăнса утма сунчĕ. Çемье, юрату тата шанăçлăх кунне ахальтен июль уйăхĕнче уявламаннине палăртрĕ вăл. Çу кунĕсенче тавралăх хĕвел çутипе тата ешĕл чечексен илемлĕхĕпе тулать. Салтак тӳми вара унăн символĕ пулса тăрать.

Салам сăмахĕсем хыççăн райадминистраци пуçлăхĕ тата Сергей Мульдияров Александр Степанович тата Мавра Степановна Герасимовсене, Геральд Иссаковичпа Таисия Васильевна Иссаковсене, Валентин Степановичпа Екатерина Никифоровна Синельниковсене «Юратушăн тата шанчăклăхшăн» медальсемпе чысларĕç. Вĕсен пурнăç çулĕ çамрăк çемьесемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче. Пĕр-пĕрне хисеплени, йывăрлăхсене пĕрле чăтса иртterme пĕлни çирĕп хутшăнусен никĕсĕ пулнине палăртаççĕ чылай çул пĕрле пурăнакан мăшăрсем.

**СĂМАХ МАЙ**

**10 çул хушшинче «Юратушăн тата шанчăклăхшăн» обществăлла медальпе муниципалитетра 30 ытла çемьене чысланă. Тăвată çемье патшалăх наградине – «Юратушăн тата шанчăклăхшăн» ордена – тивĕçнĕ.**

Геральд Иссаковичпа Таисия Васильевна Иссаковсем 53 çул пĕрле пурăнаççĕ. «Ĕçчен, юрлать-ташлать, савăнмалла пĕрле. Эпĕ купăс каланă, вăл алă çупнă», – тет Геральд Иссакович мăшăрне мĕншĕн килĕштернипе кăсăклансан. Иккĕшĕ те вĕсем котеркассисем, пускилте пурăннă. Геральд Иссакович ача чухне, 4-5 çултах, уя пучах пуçтарма тухнă. Ĕçпе писĕхсе ӳснĕскер çитĕнсен те йывăр ĕçре тăрăшнă, чукун çул цехĕнче крановщикра чылай çул ĕçленĕ, тимĕрçĕ лаççинче те кувалтăна алăран яман. Унăн ĕç стажĕ – 45 çул. 80 çула çывхарса пыракан Таисия Васильевна тивĕçлĕ канăва тухиччен фабрикăра вăй хунă, хыççăн упăшкипе юнашар – чукун çул çинче. Паянхи кун та ялти культура çурчĕ çумĕнчи фольклор ушкăнне çӳрет хĕрарăм, халăх театрĕнче те вылять. Иссаковсем хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ. Тăвată мăнукпа икĕ кĕçĕн мăнук – аслашшĕпе асламăшĕн чун киленĕçĕ. «Ман пек хуньăм карчăка пурне те сунатăп. Киле пырсан нихăçан та сĕтел хушшине лартмасăр кăларса ямасть», – тет вĕсен кĕрĕвĕ Борис. Иссаковсем ялта хисеплĕ çынсем, пурне те пулăшма тăрăшаççĕ – çакăн пек сăмахсем калать вĕсем çинчен халăх.

«Шордан» халăх фольклор ансамблĕ, Кăшавăшри культура çурчĕн артисчĕсем тата чăваш эстрада юрăçи Андрей Думилин пухăннисене юрă-ташăпа савăнтарчĕç.

**АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

## ТĔН

# Ыррине суйлама май пултăр

**Тĕн кĕнекисем ачасемпе çамрăксене православипе çывăхлатаççĕ, унăн витĕмĕпе тĕнче ырăрах. Çак шухăш «Турă пур, пур тĕнче» ăспа Турă сăваплăхĕн шкулĕ» проект никĕсне выртрĕ. Халăхсен хушшинчи «Православи инициативи-2018» пĕчĕк грантсен конкурсĕнче çĕнтернĕскере ытларикун Кӳкеçри тĕп библиотекăра презентацилерĕç. Гуманитарипе çутĕç пуçарăвĕсен «Соработничество» фончĕ ăна пурнăça кĕртме 87750 тенкĕлĕх грант уйăрса панă.**



Библиотекăри ăшă тĕл пулу саманчĕ

Шупашкар районĕнчи тĕп библиотека тытăмĕн директорĕ Галина Тимофеева пĕлтернĕ тăрăх, проект шайĕнчи пур мероприяти те Шупашкар епархийĕн II округĕпе пĕрле иртет. Грантăн тĕп укçине вара район библиотекисем валли православи кĕнекисем туянма усă курĕç. «Проект тăршшĕпех «Турă пур, пур тĕнче» ăспа Турă сăваплăхĕн шкулĕ» виртуаллă дискусси площадки ĕçлĕ. Ачасемпе çамрăксен тĕрĕс ăс-хакăл, кăмăл-сипет воспитанийĕн çулйĕрне сĕнекен библиотекăсене палăртма пулăшĕ вăл, Интернет уçлăхĕнче православи тематикиллĕ кĕнекесене сӳтсе явма май парĕ», – ăнлантарчĕ Галина Львовна.

Презентация чиркӳ специалисчĕсене хатĕрлекен Епархи центрĕн директорĕ – сектăсемпе кĕрешекен уйрăм председателĕ, Шемшерти Успени Турă амăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Илия Лебедев иерей хутшăнчĕ. Вăл паянхи пурнăçра ăс тата Турра юратни çителĕксĕрри çынсен тĕп çитменлĕхĕ пулнине палăртрĕ. «Интернет тата массăллă информаци хатĕрĕсем урлă килекен япăх информаци витĕмĕпе çамрăксем кăмăл-сипет хаклăхĕсене çухатаççĕ. Интернет уçлăхĕ сĕнекенни вырăнне вĕсен урăххине, ыррине, суйласа илме май пултăр», – терĕ Илия атте.

САНĂН ÇЫННУСЕМ, РАЙОН!




# Аса илӳ нумай ĕç валли çитĕ-ха...

**Ӳкерме вăл ачаранах юратнă. Анчах та рисовани урокĕпе «пиллĕксем» пулман тесен те йăнăш мар. Çапах япăх паллă ăна хуçайман. Хуратнă та хуратнă хута Çĕньял Чурачăк шкулĕн пулас директорĕ Антонина Павлова. Халăх йышăннă кашни ӳнерçĕ пурнăçăн çакăн пек çирĕп тĕрĕслевĕ витĕр тухать-тăр. Июлĕн 14-мĕшĕнче вăл пилĕк теçетке хыççăнхи черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать.**

Акă çак кӳлĕ хĕрринче япала чӳхесе çакнă вăл хĕр-тантăшĕпе, шыва та кĕнĕ, хăйсем çӳллĕш курăк ăшĕнче пытанмалла выляна... Миçе çула хыçа хăварнă çак пейзажсен авторĕ унтанпа? Чурачăкри сакăр çул вĕренмелли шкул хыççăн вăтам пĕлĕвĕн аттестатне илме Мамăшри шкула çӳренĕ вăл, ун хыççăн Чăваш патшалăх педагогика университечĕн физикăпа математика факультетне вĕренме кĕнĕ... Çак хушăра вара ӳкерес туртăм хыçранах йĕрленĕ. «Качча тухман пулсан татах та ӳкерĕттĕм паллах. Анчах ачасем çуралчĕç – кĕпе-йĕм, нускисем кирлĕ. Вара çыхма тытăнтăм. Картинăсем патне алă çитеймерĕ...» – каласа парать Антонина Кирилловна.

Пĕррехинче вара лавкка умĕнчен иртеймесĕр çамрăк амăшĕ çуллă сăрăсен наборне кĕрсе туяннă. «Ку манăн чи пысăк ĕмĕтчĕ. Çав вăхăт тĕлне хулара пурăнаттăмăрха, унтанпа çирĕм çул ытла та иртрĕ ĕнтĕ. Сăрăсен курупки вара пĕрлех куçса çӳрерĕ: ялтан хулана, хуларан – яла. Ăна нихăçан та хамран хăварман», – аса илет хĕрарăм. Ӳкерме вара вăл çав-çавах шикленнĕ. Тем тытса чарнă ăна.

– Çак туйăма мĕнле çĕнтертĕр? – кăсăклантăмăр эпир.

– Ку вăл – шăпа çырни. Шăп çакăн чухне урана хуçнипе килте ларма тиврĕ. Килтен уйăх çурă тухса çӳреймерĕм. Малтан хут çине кăранташпа ӳкертĕм, кайран сăрă курупки пирки аса илтĕм. Пĕр сывлăш çавăрмасăр граффитие çуллă сăрăпа витрĕм. Питĕ килĕшрĕ.

– Пĕррехинче ирех мăшăрпа выльăх-чĕрлĕхпе аппаланаттăмăр, – темĕн чухлех аса илмелли Павловсен. – Пахчана тухрăм та куç тĕлĕнмелле ӳкерчĕк çинче чарăнса тăчĕ. Ача чухне краççын лампа çунни аса килчĕ: хĕвел ун евĕр шуса тӳпене çĕкленет. «Тыт витрене, – терĕм мăшăра. – Паян вылăх-чĕрлĕх санăн, эпĕ вара ӳкерме каятăп». Ку ĕçе «Хĕвел вăранчĕ» ят патăм.

– Тĕрĕссипе, кил-çуртра тăвата ăру килĕштерсе пурăнма пултарни те хăех искусство – тет районти Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Алевтина Исаева. Теçетке çул каялла общество пĕрлешĕвĕ муниципалитетри чи хастар тата харсăр хĕрарăмсен çĕнĕ йышне пĕр чăмăра пухнă. Унта Антонина Павлова та кĕнĕ. «Кукамай, атте-анне, манăн çемье тата ачасем – пурте килĕштерсе пурăнтăмăр. Пĕр-пĕринчен пĕр сивĕ сăмах илтмен», – тет Хĕрарăмсен канашĕн Ишлей енчи ертӳçи. Кунсăр пуçне вăл Шупашкар районĕн депутачĕсен пиллĕкмĕш пухăвĕнче те тăнă, «чурачăксен республикăри слетне» йĕркеленĕ. Тĕрĕсех, çакăн пек пултаруллă та тăрăшуллă хĕрарăм çумĕнче шанчăклă пулăшуçă кирлех. Çак тĕреве вара ăна мăшăрĕ парса тăнă. Куçĕсем шывланчĕç хĕрарăмăн. Мăшăрĕ Володя кил-тĕрĕшĕнчи питĕ нумай яваплăха хăйĕн çине илсе тăни пирки каласа кăтартрĕ Антонина Кирилловна. Иртнĕ уйăхра Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейра уçăлнă «Çутта хисеп туса» картинăсен куравне те çемье пуçĕ чечек çыххипе килнĕччĕ. «Киле кĕртмĕ тата», – шӳтлесе илчĕ вăл ун чухне. «Ачасем те эх, мĕн аппаланатăн-ши эсĕ тесе нихăçан та каласа курман. Пачах урăхла, чылай ĕçе стена çине çакма ыйтаççĕ», – тет телейлĕ амăшĕ. Çакă йăлтах хавхалантарса пынă та ăна. Район çыннисем ăна ентеш-художниксем пĕлтĕр музейра йĕркеленĕ «Хамăр ял» курав тăрăх та пĕлеççĕ.

– Шкулта эсир 33 çул ĕçлетĕр. Вĕсенчен 12-шне – математика учителĕнче. Ку предмет – тĕп-тĕрĕс наука. Унпа ӳнерçĕ профессийĕ хушшинче пĕр пеклĕх пур-и? – кăсăклантарчĕ пире художник шухăшĕ.

– Художникĕн те куç умĕнчине тĕп-тĕрĕс курма пĕлмелле. Халĕ унчченхи ĕççене тытса пăхатăп та — йăнăшсем чăн та пулнă. Çакна эпĕ педуниверситетăн художествăпа графика уйрăмĕ хыççăн ăнлантăм. Вĕреннĕ чухне Анатолий Васильевич Данилов деканпа пленэрсене тухса çӳреттĕмĕр. Пĕрле вĕреннĕ хĕр-туссем çак ӳкерчĕксене курсан вырăнсене тӳрех палласа илеççĕ. Канаш районĕн пики Аня акă пĕррехинче хăйĕн ӳкерчĕкне киле те илсе çитерейменерĕ – ĕçе вĕçленĕ-вĕçлемен иртен-çӳрен вăйпах туянса юлчĕ.

Интернетри мастер класcсем тăрăх çырнă картинăсем те пур ентеш-художникĕн. Çапах тăван тавралăх, тăван кил сăнланнисенчен уйрăмах ăшăлăх вĕрет. Акă Хачăк вăрманĕ... Ĕлĕк хачăксемпе чурачăксем пĕр колхоза кĕмен. Ĕне çитерме ку вăрмана çӳреме чарнă – тӳрех хăваласа янă. Аса илӳ сахал мар сыхланса юлнă. Вăл тата нумай-нумай ĕç валли çитĕ-ха.

**ТАТЬЯНА МАЙОРОВА**

АСА ИЛ-ХА, САЛТАК

## Тен аслаçу вăл?

**«Ленинград хӳтĕлевçисем – «Паллă мар салтак» пек пытарнисем уçăмсăрлăхран таврăнаççĕ» проект волонтерĕсем Санкт-Петербургпа Ленинград облаçĕсен территорийĕсенче шырав ĕçĕсем ирттерни пирки унччен маларах tavanen.ru интернет-кăларăмра пĕлтернĕччĕ эпир.**


Павел Терентьев

Чăваш Енĕн тĕп хулин вĕрентӳ управленийĕ вĕсен пирĕн ентешсен – Ленинграда хӳтĕленĕ чухне пуç хунă, анчах та хальччен хыпарсăр çухалнă тесе шухăшланă 17 салтак – ятне тупса палăртма май килнине пĕлтерет. Вĕсен хушшинче Шупашкар районĕнче 1914 çулта çуралнă Петр Терентьевич Терентьев ячĕ те пур. Вăрçа Шупашкар районĕн çар комиссариатĕнчен тухса кайнă. Вăл 294-мĕш çар чаçĕн йышĕнче Тăван çĕршыва хӳтĕлени паллă. Çуралнă ял ятне кăтартман.

Çапах та эпир истори документчĕсенчен Терентьевпа пĕр хушаматлă пирĕн ентеш Сталинград çапăçăвне хутшăнни çинчен пĕлтĕмĕр. Сăмах Хураçырма Мамăш ялĕнче çуралнă Павел Терентьев пирки пырать. Ашшĕ ячĕ те вĕсен пĕр – иккĕшĕ те Терентьевичсем. Тăван çĕршыва тăшман тапăнса кĕрсен иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче фронта темиçешер ывăл ăсатнă çемьесем сахал мар пулнă. Çакна палăртса хапхасем çине ялсенче ывăлсен шучĕпе çăлтăрсем çакса хунă. Терентьевсем шăпах çакăн пек паттăрсене çитĕнтернĕ çемьесенчен пĕрисем мар-и-ха? Аслăрах çулсенчи вулакана Терентьевсене лайăх ас тăвакан çынсемпе канашласа редакципе çыхăнма ыйтатпăр: Кӳкеçе 2-21-88 телефон номерĕпе шăнкăравлăр. Сăмах май, Петр Терентьевăн тупнă япалисене тавăрса пама волонтерсем хальхи вăхăтра фронтовик тăванĕсене шыраççĕ.

Хыпарсăр çухалнă тесе шухăшланă, анчах та Ленинград облаçĕнче пуç хунă салтаксен çичĕ теçетке çултан тупса палăртнă хушамачĕсемпе, çуралнă вăхăта тата тăван районне кăтартнă списокпа tavanen.ru сайтра паллашма май пур.

**«ТĂВАН ЕН» ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ**

ВУЛАКАН СĔНЕТ

## Акă мĕнле кĕрешмелле!



Паян ялпа иртнĕ чухне хамăр урамра пурăнакан Александра Мадерова чарăнса тăма ыйтрĕ. Вăл эпĕ район хаçатне çырса тăнине лайăх пĕлет. Нумай пулмасть сиенлĕ пултăран – борщевик – ĕрчесе кайни çинчен пичетленĕ статьяна хаçатра вуланă вăл. Телевизорпа та çав усал ӳсентăран çинчен кăтартнă передачăна пăхнă. Чăнах та хăрушă! Ӳте çунтарать, суккăр та хăварма пултарать! Пахчине тухмассерен ун çине пăхса ассăн сывланă. Александра Андреевна çав пултăрана тăвар сапса пĕтерни пирки каласа пачĕ. Туни хăвăл пулнă – тăвара ун ăшне сапнă та сапнă. «Пултăрана пĕтерме им-çам шутласа тупман, тăвар сапса пĕтермелле. Çырса яр-ха хаçата», – çапла канаш пачĕ вăл мана.

**ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА,**
**МĂН МАРКА**

КИВĔ САН ӲКЕРЧĔК



**Сăн ӳкерчĕкре Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз механизаторĕсем: Александр Майков, Анатолий Петров, И. Наумов, Юрий Васильев, Виталий Егоров, Валерий Егоров, В. Яковлев, Юрий Арефьев, Василий Николаев, Алексей Павлов, Юрий Игнатьев, Альберт Бородов, Валерий Бородов, Игорь Андреев, Владимир Ильин, Леонид Егоров, Анатолий Андреев, Николай Григорьев. Вĕсем пурте ĕçре туптаннă, колхоз ятне çĕкленĕ. Хăшĕ-пĕри халĕ тивĕçлĕ канура. Хăй вăхăтĕнче вĕсем туман ĕç пулман. Колхоз правленийĕ вĕсене Хисеп грамотисемпе, хаклă парнесемпе чысланă.**

## ДЕЛА МЕСТНЫЕ

### Д. ЯРАНКАСЫ

Житель д. Яранкасы Синьял-Покровского сельского поселения Евгений Майоров намерен разводить альпаков и построить для них ферму. Для них он пока возвел временный вольер с выгулом, позже собирается увеличить его площадь до 15-20 соток. Об этом он рассказал журналистам ГТРК «Чувашия».

Напомним, что осенью прошлого года он завез альпаков второй раз. Евгений привез 3-х альпаков. Одного самца, к сожалению, не стало. А две самки уже дали приплод, и детенышей назвали Мартин и Фаина. Несмотря на кротость характера, альпаки очень хорошие родители, и если что-то приключится с детенышем, будут защищать его даже от хозяина.

В первый раз из-за неправильно оформленных документов Евгений потерял и деньги, и альпаков, а они очень дорогие.

### П. КУГЕСИ

5 июля из военкомата п. Кугеси отправилась на Республиканский сборный пункт в г. Канаш еще одна команда призывников в составе 12 человек. Среди них — двойняшки Иван и Андрей Григорьевы из д. Ильбеши Синьяльского сельского поселения. Они попадут в одну часть и будут служить в воинской части под Санкт-Петербургом. Всего за весенний призыв из района были призваны в армейские ряды 47 человек.

### Д. КЛЫЧЕВО

4 июля в отделе ЗАГС администрации Чебоксарского района зарегистрировано рождение 300-го с начала года новорожденного. Молодой папа Иван Гаврилов рассказал, что его первый ребенок – дочка – появилась на свет 2 июля. Мама Олеся с новорожденной пока еще находятся в больнице. Ксения будет проживать в д. Клычево Абашевского сельского поселения. «Мы очень обрадовались, когда узнали, что будет девочка, ведь главное, чтобы ребенок был здоровым. Имя выбрали, потому что оно нам понравилось», – добавил Иван. С начала года в районе 7 девочек нарекли именем Ксения. Оно занимает четвертое место по популярности в этом году. Всего с начала года родились 142 мальчика и 158 девочек.

### Д. КШАУШИ

В этнокомплексе «Ясна» провели 8 июля, в День семьи, любви и верности, сбор дикоросов. Для участников мероприятия организаторы разработали специальную гостевую программу «Иван-чай». Уже в 7 утра их облачили в народные костюмы, затем начался практикум «Сила травы» и сбор иван-чая. После состоялись чайные посиделки, за которыми гостей обучали технологии ферментирования. В полдень начался практикум «Сила воды» с обливанием, а после обеда – проектная работа «Шалаш лечебных трав», а затем и фотосессия в народных костюмах, мастер-класс по русской гармонии.

## ПОДПИСКА

# Успейте подписаться досрочно

**Почта России объявляет старт досрочной подписной кампании на 1-е полугодие 2019 года по сниженным ценам. Цена на подписку на газету «Тӑван Ен» составит 370 рублей 14 копеек.**

С 1 июля по 31 августа во всех почтовых отделениях страны, а также в режиме онлайн на сайте podpiska.pochta.ru проводится досрочная подписная кампания на периодические печатные издания на первое полугодие 2019 года. Порядок подписки и тарифы остаются такими же, как и для второго полугодия 2018 года. В течение двух месяцев все желающие смогут оформить подписку на газеты и журналы по ценам предыдущей подписной кампании, выбрав из более чем тысячи изданий, принимающих участие в досрочной подписной кампании. С 1 сентября, во время основной подписной кампании на первое полугодие 2019 года, тариф на доставку периодической печати будет повышен на 7%.

Новости с пригородным акцентом

# Причебоксарье

# Система «112» набирает обороты



ИЗ ПЕРВЫХ УСТ

**На территории Чувашской Республики завершается работа по созданию системы-112. Система-112, включая Центр обработки вызовов «112», структурно входит в состав казенного учреждения Чувашской Республики «Чувашская республиканская поисково-спасательная служба» ГКЧС Чувашии и начала работу в тестовом режиме с 20 июня 2017 года. С 23 ноября по 23 декабря 2017 года система-112 на территории Чувашской Республики успешно прошла этап опытной эксплуатации, получив разрешение Минкомсвязи России на использование номера «112». 25-27 декабря 2017 года проведены государственные испытания. Вопросы функционирования обсудили с председателем Государственного комитета Чувашской Республики по делам гражданской обороны и чрезвычайным ситуациям Вениамином ПЕТРОВЫМ.**

**– Вениамин Иванович, о системе 112 уже знают многие, но как это отражается на количестве звонков, поступающих в службу?**

– Система-112 создается для организации вызова экстренных оперативных служб по принципу «одного окна», что позволяет ускорить реагирование и улучшить взаимодействие экстренных оперативных служб при вызовах. Количество вызовов по единому номеру «112» с момента начала функционирования постоянно возрастает. К началу 2018 года количество звонков увеличилось до двух – двух с половиной тысяч в день (порядка 62 тысяч звонков в месяц), а к маю, июню количество звонков стало более 70 тысяч в месяц. Среднее количество вызовов на 1 оператора в сутки составляет 675. К сведению, в ближайших регионах Приволжского федерального округа среднее количество вызовов на 1 оператора в сутки: Татарстан – 353, Нижегородская область – 313, Марий Эл – 286.

**– В чем главное преимущество работы системы 112?**

— До номера «112» можно дозвониться и со стационарного телефона, мобильного телефона, в том числе и с телефонов, не имеющих Sim-карту. За одни сутки операторами центра обработки вызовов принимаются до 3 000 звонков и после обработки направляются в соответствующие экстренные оперативные службы для реагирования на происшествия. Если сравнить поступающие звонки для передачи в соответствующие дежурно-диспетчерские службы экстренного реагирования, они распределены следующим образом (данные по итогам за первое полугодие текущего года): противопожарная служба – 4482 звонка; полиция – около 13475 звонков; скорая медицинская помощь – 22389 звонков; ЕДДС – 7249 звонков.

**– Наверняка, поступают на номер «112» и непрофильные звонки?**

– В момент, когда оператор будет занят отвлеченным от работы вопросом, кому-то будет необходима реальная помощь экстренных оперативных служб.

Сегодня в случаях угрозы здоровью или жизни людей, когда счет идет на минуты, уже необязательно поочередно звонить службам «01», «02», «03», «04», каждый раз ждать, когда произойдет соединение с оператором, а потом снова и снова объяснять, что произошло. Достаточно набрать одинединственный номер службы спасения «112», и квалифицированный специалист в считанные секунды определит всех, кого необходимо направить на помощь, а потом еще и проконтролирует, как они выполнили свою работу.

ГКЧС просит жителей республики не обращаться в службу с вопросами консультативно-справочного характера. Так, сейчас за сутки в Центр обработки вызовов таких обращений поступает от 150 до 300, за полугодие таких звонков около 30 тысяч. Но эти звонки, как минимум, понятны, и их можно перенаправить адресатам. А есть и такие, которые просто вредят как работе экстренных служб, так и людям, оказавшимся в чрезвычайной ситуации и ожидающим помощи. Их можно отнести к категориям «Детская шалость» или «Ложные». Таких звонков ежемесячно поступает порядка 2,5 тысячи. Всего же количество звонков, которые специалисты свели в общую условную категорию «нежелательные», достигает 70 процентов. И основные причины здесь –личная безответственность абонентов, невоспитанность детей, а порой и взрослых, а также намеренное телефонное хулиганство.

**КСЕНИЯ АРХИПОВА**




**КСТАТИ**

**Через Центр управления кризисных ситуаций ГУ МЧС РФ по Чувашии в Единую дежурно-диспетчерскую службу Чебоксарского района за 6 месяцев 2018 года поступило 2244 звонка по номеру «112». Непосредственно по номеру ЕДДС (883540) 2-13-47 в месяц поступает по 100 звонков от жителей муниципалитета. Об этом сообщила ведущий специалист-эксперт сектора специальных программ администрации Чебоксарского района Ольга Степанова.**

**В заключение ГКЧС Чувашии информирует – с октября 2017 года на территории Чувашии проходит опытная эксплуатация системы обеспечения вызова экстренных оперативных служб по единому номеру «112» (система-112). В настоящее время данная опытная эксплуатация на стадии завершения. В текущем году систему-112 в республике планируется запустить в постоянную эксплуатацию.**

**ОПРОС**

**проводился в группе «Таван Ен» в социальной сети «ВКонтакте»**

**ЗНАЕТЕ ЛИ ВЫ, ЧТО ТАКОЕ СИСТЕМА 112?**

| | |
|---|---|
| Да, обращался за помощью | 23% |
| Нет | 3,3% |
| Звоню в экстренные службы по персональным номерам | 21,3% |
| Слышал, но не приходилось звонить | 34,4% |
| Лучше бы не знать | 4,9% |
| Мне все равно | 1,6% |
| Обращались, остались недовольны | 8,2% |
| Обращались, быстро среагировали | 3,3% |

## СЕМЬ Я

# Маткапитал – на жилищный кредит

**Теперь средства материнского капитала можно направить на рефинансирование ранее взятых жилищных кредитов независимо от того, когда возникли финансовые обязательства: до рождения ребенка, с появлением которого семья приобрела право на капитал, или после. Об этом сообщили в Управлении Пенсионного фонда РФ в Чебоксарском районе.**

Кредиты, оформленные с целью перекредитования ранее взятой ипотеки, раньше можно было погашать с помощью материнского капитала только при одном условии: если обязательство перед банком появилось до возникновения права на материнский капитал.

По новым правилам это ограничение для перекредитования ипотеки снимается: отныне можно направить средства материнского капитала на погашение рефинансирующих кредитов вне зависимости от того, когда они были взяты – до или после рождения второго ребенка.

Например, второй ребенок родился в 2015 году. В 2016 году семья приобрела в ипотеку квартиру, а через некоторое время оформила обычный кредит, погасив им ипотеку, и сейчас оплачивает его. Ранее материнским капиталом расплатиться за этот кредит было нельзя, т.к. кредитные обязательства возникли после рождения второго ребенка. Теперь можно.

Напомним, материнским капиталом можно улучшить жилищные условия, оплатив полностью или частично: приобретение жилья (посредством любых сделок); затраты на строительство или реконструкцию жилого помещения; долг по кредиту, который был взят на указанные выше цели (в т.ч. первоначальный взнос, сумму основного долга, а также начисленные проценты).

В Чебоксарском районе с 2007 года в рамках федеральной программы материнского капитала погасили жилищные кредиты 43 536 семей с детьми на сумму 16,9 млн рублей.

ТРАНСПОРТ

## Автобусы передадут в аренду



**Министерство транспорта и дорожного хозяйства Чувашской Республики после прекращения ГУП ЧР «Чувашавтотранс» с 5 июля 2018 г. перевозок пассажиров по муниципальным маршрутам в гг. Алатырь, Шумерля, Канаш осуществляет ежедневный мониторинг за сложившейся ситуацией.**

По всем муниципальным маршрутам (г. Чебоксары – 15 маршрутов; г. Новочебоксарск – 2 маршрута; г. Канаш – 2 маршрута; г. Шумерля – 6 маршрутов; г. Алатырь – 5 маршрутов; Козловский район – 6 маршрутов; Красночетайский район – 5 маршрутов) определены временные перевозчики, найден подвижной состав. Перевозки осуществляются в полном объеме. В настоящее время Министерством начаты конкурсные процедуры по определению временных перевозчиков по 94 межмуниципальным маршрутам, которые ранее обслуживал ГУП ЧР «Чувашавтотранс». В целях обеспечения временных перевозчиков необходимым подвижным составом рассматривается вопрос о передаче им в аренду автобусов ГУП ЧР «Чувашавтотранс».

ГОСУСЛУГИ

## Как получить скидку 30%?

Только при подаче заявления в электронном виде на портале ЕПГУ можно получить скидку в размере 30%. Для этого необходимо зайти по адресу: www.gosuslugi.ru, а также с помощью бесплатного мобильного приложения «Госуслуги» (GooglePlay, AppStore, WindowsStore). Затем необходимо выбрать безналичный способ для оплаты госпошлины: банковская карта (MasterCard, Visa, Мир), электронный кошелек (QIWI, Webmoney, ЯндексДеньги), мобильный телефон (Федеральные операторы).

Если условия соблюдены, то вы получаете возможность оплатить госпошлину с коэффициентом 0,7, т.е. со скидкой 30%.

Например:

| Услуга | Размер госпошлины | Размер госпошлины через портал |
|---|---|---|
| Восстановление российского паспорта (утрата) | 1500 руб. | 1050 руб. |
| Оформление загранпаспорта | 3500 руб. | 2450 руб. |
| Выдача российского паспорта с достижением возраста, с изменением установочных данных | 300 руб. | 210 руб. |

# В гостях у путешественников

**5 июля в Шобашкаркасинском сельском клубе по чувашской традиции с хлебом и солью встретили краеведческую экспедицию клуба путешественников – школьников из школы № 109 города Москвы под руководством Владимира Музалева. Перед гостями с концертной программой выступил фольклорный ансамбль «Шурăмпуç» под руководством Леонида Захарова. Концертную программу вела заведующая клубом Любовь Иванова. Руководитель группы Владимир Музалев ознакомил собравшихся с работой клуба путешественников.**

ТУРИЗМ

### Встреча в клубе

В составе группы – 24 ребенка и 10 взрослых. Они спустились из Васильсурска вниз по реке на 4 шлюпах и в сопровождении парохода «Витязь». 4 июля разбили лагерь вблизи садоводческого товарищества «Три дуба» в районе деревни Адытьял и водно-спортивного клуба «Форватер». В составе экспедиции – три команды: «Ландшафт» под руководством члена президиума Русского географического общества, доктора географических наук Сергея Буланова, «Водные экологи» под руководством гидробиолога, кандидата биологических наук Александра Иванова и «Историческое» под руководством куратора Алены Ларкиной предстали перед нами.

«Мы изучаем Поволжье, Волгу, ее берега, растения, жителей, какие насущные проблемы волнуют их. Экспедиция — комплексная: четыре дня шли сюда, гребли с остановками в Козьмодемьянске Марийской Республики, а затем в селе Морозкино, где живет художник Сергей Алдушкин. Ходили на экскурсии в клубы и музеи. В ваших краях сделали 4-ю остановку», – рассказал Сергей Буланов.

«На первый курс принимаем с 5-го класса. Дети учатся две недели и 8 дней проводят в экспедиции. Они самостоятельно готовят пищу. Мы посвящаем их в члены клуба путешественников. Уже знают, что делать в дождь, как палатку поставить, разжечь костер. На 2-м курсе их посвящают в «путешественники» – это очень большое звание. На 3-й курс из 40 человек доходят 12 – дальше в «капитаны-вожатые». Всего 6 капитанов. У нас есть экипажи: «Ярые тигры» под руководством капитана Марка Валиева, «Покорители ветров» Володи Валиева и «Супергруппа» Александра Потапова», – ознакомил он со своими ребятами. На следующий день они посетили конюшню Розы Бычковой, а также опросили ее и Юлию Иванову об истории деревни Шобашкаркасы.



Главное в лагере – дисциплина



Жители д. Шобашкаркасы примерили спасательные жилеты и прокатились на шлюпках по Волге

### В лагере у москвичей

6 июля участницы фольклорного ансамбля «Шурăмпуç» вместе с заведующим Шобашкаркасинского сельского клуба Любовью Ивановой и жителями деревни Шобашкаркассы нанесли встречный дружеский визит в лагерь клуба путешественников. Лагерь из 16 палаток (9 из них детские) расположился в живописном месте прямо у кромки широкой реки Волги.

Сначала местные жители и гости дружно сыграли с ребятами в пионербол, затем начали знакомиться поближе. Марк Валиев не только изучает историю, но и хорошо играет и поет на гитаре. Он мастерски спел 3 песни из репертуара группы «Сплин», а девочки с его группы подпевали.

Депутат Вурман-Сюктерского сельского поселения Николай Смирнов рассказал, что до поднятия Волги в 1980-1981 годах прошлого века на этом месте находились спортивная площадка лагеря труда и отдыха «Волжанка» Кибечкасинской восьмилетней школы, были овощеводческие теплицы местного хозяйства, на полях которого трудились и отдыхали местные жители. Он презентовал москвичам свои книги.

С лагерем и его бытом ознакомил руководитель Владимир Музалев. Географ Сергей Буланов в это время занимался с «ландшафтной» группой и вел занятие. «Составляем график погоды, запись растений, по рельефу, про почву», – сказал он. Дети пьют только покупную бутилированную воду, а готовят пищу из артезианской. В палатке педиатра Марии Проскуры, работающей в детской Республиканской больнице г. Москвы, имеются не только медикаменты, но и запас продуктов. Врач специально готовит марганцовку для обработки посуды. Руки моют с жидким мылом. Продукты хранятся в специальном пластмассовом баке от мышей – сверху завтрак, в середине перекус, снизу ужин. В баке находятся: хлеб, сахар, лимон к чаю, колбаса. Для нужд кухни заготовлены дрова.

Потом руководитель экспедиции показал гостям построение детей на вечернюю поверку у знамени клуба путешественников. В каждом экипаже один человек ведет дневник, где записываются впечатления за день.

Затем Владимир Музалев рассказал об устройстве парусного шлюпа, что представляет собой точную копию шлюпа Петра I 18 века и с теми же названиями и как им управлять. Шлюп длиной 6 метров, а весла (их четыре) по 3 метра каждая. Мачта высотой 5,5 метра, площадь парусов – 2,5 кв. метра. Шлюпы изготовлены в г. Сочи.

7 июля путешественники и провели тренировки по «переворачиванию шлюпа», а вечером — игры, костер и песни под гитару. 8 июля они отдыхали, а 9 июля – экскурсии по Чебоксарам. Затем на автобусе они поехали в город Казань для проведения конференции по итогам экпедиции. Пароход доберется до Москвы своим ходом, а шлюпы доставят на фурах. Путешественники из Казани в свой город вернутся уже на поезде и разгрузят шлюпы во дворе своего клуба.

А газету «Тăван Ен» уже сегодня первым же автобусным рейсом за ними мы отправим сами.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ,** АДЫЛЪЯЛ

## ГОРОСКОП НА НЕДЕЛЮ. ИЮЛЬ 16 - 22

**ОВНЫ,** мир снова начнет вам нравиться, а проблемы окажутся меньшими, чем вы о них думали. Уверенно ступайте по земле.

Будьте внимательны, **ТЕЛЬЦЫ,** чтобы не пропустить кого-то, кто давно ищет способ узнать вас получше и подобраться поближе.

Замужние и женатые **БЛИЗНЕЦЫ** склонят своих вторых половинок к переменам, которые кажутся им весьма важными и нужными.

В выходные **РАКИ** тоже не усидят спокойно на одном месте. Выезд куда-либо подальше или хотя бы однодневная поездка улучшат вам настроение.

**ЛЬВЫ,** пришло время отдохнуть и набраться сил. На этой неделе не делайте ничего через силу и не перенапрягайтесь.

**ДЕВ** ждут дополнительные обязанности. Не беспокойтесь, потому что вслед за ними пойдут и деньги. Проявляйте настойчивость в отстаивании своих интересов.

Новые знакомства окажутся очень интересными, **ВЕСЫ.** Выходные благоприятствуют отдыху и социальным встречам.

То, от чего раньше приходилось отказываться **СКОРПИОНАМ** Юпитер благоприятствует удачным закупкам, а также значительным транзакциям и инвестициям.

**СТРЕЛЬЦАМ** удастся наконец взять под контроль новые дела. Вы упорядочите хаос, наверстаете различные задолженности.

Планы **КОЗЕРОГОВ** будут требовать обсуждения с важными, но труднодоступными знакомыми. Не пропустите хороших идей.

**ВОДОЛЕЯМ** будет сложно убежать от знакомых, которые станут видеть в них идеального советчика. Не доверяйте людям, которые вас уже когда-то подводили.

**РЫБЫ,** не упустите возможность продемонстрировать свои навыки и взгляды в более широком, чем обычно, кругу.

## Цифры и факты

**С 4 по 10 июля в Чебоксарском районе**

| | | |
|---|---|---|
| **Родилось детей** | | |
| 9 | мальчиков | 4 |
| | девочек | 5 |
| **Умерло человек** | | |
| 12 | мужчин | 2 |
| | средний возраст | 61 |
| | женщин | 10 |
| | средний возраст | 79 |
| **Заключено браков** 14 | **Совершено разводов** 5 | |

По данным районного отдела ЗАГС

**2,1 человека** на место – конкурс в вузы Чувашии



## В этот день

**17 июля – День основания Морской авиации ВМФ России.** 17 июля 1916 года над Балтийским море русские летчики одержали победу в воздушном бою в ходе Первой мировой войны.

**18 июля – День создания органов Государственного пожарного надзора в России (ГПН).** Точкой отсчета в истории возникновения ГПН стало подписание 18 июля 1927 года Всероссийским центральным исполнительным комитетом и Советом народных комиссаров «Положения об органах Государственного пожарного надзора в РСФСР».

**19 июля – День юридической службы Министерства внутренних дел России.** Праздник появился в календаре в 2003 году, когда Борис Грызлов, занимавший тогда должность министра внутренних дел, подписал соответствующий приказ.

## Анонс

**Читайте www.tavanen.ru**

- Победитель конкурса «Мой двор – самый красивый» в п. Кугеси получит малые архитектурные формы стоимостью 100 тысяч рублей.
- Суд обязал обустроить наружное освещение в переулке Северный в д. Б. Катраси.
- День поселка Кугеси состоится 11 августа.
- Вблизи новой станции ВСМ в Чувашии планируют построить жилой кластер, медцентр и индустриальный парк.

● Во саду ли в огороде

## Нужно ли обрывать листья у капусты?

**Очень часто ближе к осени многие садоводы обрывают листья у капусты, оставляя практически голые кочаны. Многие, кто этим не занимается, посмотрят, что делают другие, и задают вопрос, надо ли обрывать листья?**

Здоровые зеленые листья капусты обрывать вредно, урожайность кочанов зависит от количества листьев в розетке. Нижние листья у капусты – главный ассимиляционный аппарат, который работает на урожай, питательные вещества из них поступают во внутренние, белые листья кочана. При этом увеличивается содержание сухих веществ от внешних листьев кочана к центральным. Кроме того, зеленые листья покрыты воскообразным налетом, который защищает растение от вредителей, болезней и механического повреждения. В наружных зеленых листьях капусты содержится 57 мг витамина С, в средних и белых листьях – 31–36 мг, а в листьях центральной части кочана – 24–26 мг. Поэтому удаление большого количества наружных листьев приводит к обеднению капусты витамином С. Каждый срезанный лист провоцирует отмирание корневой системы, и кочану достается меньше питательных веществ. Не совсем желательно снимать даже пожелтевшие листья, так как из них и черешков продолжается отток питательных веществ в кочан. Обрывая нижние листья, огородник заведомо снижает урожай и качество продукции. Кроме того, через ранки в растение попадают вредные организмы, вызывающие заболевания.

Среднеспелые и позднеспелые сорта капусты в августе-сентябре весьма интенсивно набирают вес кочана за счет нижних зеленых листьев. Суточный прирост массы составляет 100 г и более, сам кочан при этом сильно уплотняется. Если срубать капусту с зелеными листьями, то отток питательных веществ в кочан будет продолжаться, и его масса может увеличиться до 15%.





## «Паха тĕрĕ» – в Татарстане и Иркутской области

**Фабрика художественных промыслов «Паха тĕрĕ» продолжает знакомить всю Россию со своей продукцией. С 27 июня по 1 июля во Дворце Сюзора г. Санкт-Петербург прошла выставка-продажа ювелирного и декоративно-прикладного искусства «Золотые мастера». В ней приняли участие более 100 мастеров и художников из самых разных регионов России и Ближнего зарубежья.**

Впервые на этой выставке была представлена и экспозиция Фирмы художественных промыслов «Паха тĕрĕ». В открытии выставки активное участие приняли чуваши, проживающие в городе на Неве, под руководством первого заместителя РОО «Санкт-Петербургское чувашское объединение» Валериана Гаврилова. Чувашский фольклорный ансамбль «Юрату» исполнил чувашские и русские песни. Красивый национальный наряд не оставил равнодушным участников и посетителей выставки, многие изъявили желание сфотографироваться с участниками ансамбля. Заместитель директора ФХП «Паха тере» Маргарита Павлова также поприветствовала участников и посетителей выставки «Золотые мастера», отметив, что экспозиция фирмы будет радовать посетителей красивыми изделиями с чувашской вышивкой. Участие в выставке «Золотые мастера» показало, что петербуржцам интересны изделия с чувашской вышивкой. Особенно жительницам города на Неве пришлись по душе блузы и туники с чувашской вышивкой. «Ценность и богатство нашего национального костюма никого не оставляет равнодушным, ведь он уже давно стал брендом республики. Благодаря его яркости и самобытности в ходе выставки мы смогли показать посетителям наглядно рассказать об истории нашего народа, которая сохранилась в вышивке», – добавила Маргарита Яковлевна.

5 июля с продукцией фабрики ознакомились гости Тихвинской ярмарки в г. Цивильск. 7 июля их увидели в поселке Аксубаево Аксубаевского района Республики Татарстан, где прошли народные гуляния в рамках праздника «Уяв». 8 июля в г. Нурлат (Татарстан) фабрика представила изделия на всероссийском празднике чувашской культуры «Уяв».

14 июля выставка фабрики откроется в Музее истории города Иркутска «Городской выставочный центр им. В.С. Рогаля». С 16 по 24 июля здесь же будет проходить X Международный фестиваль «Этноподиум на Байкале», где будет представлено 30 национальных костюмов фабрики. 17 июля в рамках мероприятия пройдет конференция, где Маргарита Павлова выступит с докладом на тему «Сохранение традиций национальной чувашской вышивки». Напомним, что в декабре фабрика художественных промыслов «Паха тĕрĕ» отметит 95 лет со дня основания.

● Те для деток






В Кугесьском детском саду «Пӳрнеске» 5 июля отметили День воздушного шара. В спортивных состязаниях приняли участие все воспитанники.

Сосчитайте яблоки в корзинах, впишите буквами количество яблок в клетки. И тогда вы узнаете, как зовут девочку.



– Лена, куда ты! Постой! Не надо показывать собачке, что ты ее боишься.

Лена, убегая:

– А зачем я ей буду врать, если я ее и вправду боюсь?

В автобусе мальчик четырех лет сидит на руках у отца. Входит женщина. Мальчик, желая быть вежливым, вскакивает с отцовских колен:

– Садитесь, пожалуйста!






# Çынпа та, техникăпа та пĕр чĕлхе тупсан



Шорккари пуçарулла ушкăн

А. Тихонова сăн ÿкерчĕкĕсем

**Шурă кĕпипе галстукне хывса хурса тракторне тапратса тухать вăл. Ĕç кунĕ вĕçленсенех ял тăрăх пуçлăхĕн «тепĕр смена» пуçланать: кама утă-улăм турттарса пулăшмалла, хăшне утă çулса памалла... «Халь те тракторист», – шÿтлет Павел Николаевич «пĕрремĕш професси сая кайман» тенине хирĕç. Сарапакасси пуçлăхĕччен заводра слесарь, сборщик, хуçалăхра комбайнер тата тракторист пулса ĕçленĕ Павел Амурцев. Рабочи тумне тахçанах пиншакпа ылмаштарнă пулин те унăн аллисем хресчен ĕçне манман-ха. Арçыннăн пур профессие те кăштах та пулин чухламаллине палăртать Павел Николаевич.**

## Шăтăк-путăксăр çулсем

«Лапсар-Мокшин» çула трассăран пăрăнса кĕрсен Мокшин таран асфальт хуратпăр», – ял тăрăхĕнчи юсав ĕçĕсемпе вырăна çитсе паллаштарать Павел Амурцев. Çул тахçанах ванса пĕтнĕ, унпа çÿреме меллĕ маррипе халăх кăмăлсăр пулнă. Пĕлтĕр çулăн çуррине асфальт хунă. Кăçал çак ĕçе вĕçлемелле. «Хăрушлăхсăр тата паха çулсем» программăна та кĕме май килчĕ. Ял тăрăхне 3 млн та 172 пин тенкĕ уйăрса пачĕç. Çак укçа-тенкĕпе Çатракассинче хытă сийлĕ çул саратпăр», – тет Павел Николаевич.

Сарапакассинче те техника иртен пуçласа каçчен кĕрлет. Çул çинче ĕç вĕресе кăна тăрать. 330 м тăршшĕ çула хытă сий хураççĕ ялта. «Кашни накладнойне пырса тĕрĕслетĕп. Мĕн чухлĕ пăхса хунă, çавăн чухлĕ вак чул тăктаратăп», – тет Павел Амурцев. Пур ĕçе те хăй умĕнче тытма тăрăшать пуçлăх. Ял тăрăхĕнче кăçал çул-йĕр фондне çĕнетме 800 пин тенкĕ пăхса хунă. Çак укçа-тенкĕпе Мокшин ялĕнчи Гагарин тата Сарапакассинчи Октябрьская урамсене хытă сийлĕ çул сармалла. Ытти ялта та шăтăк-путăклă çулсем пур. Хальлĕхе ялсене кĕнĕ вырăнсене те пулин йĕркене кĕртес тĕллевлĕ Павел Николаевич.

## Шывсăр май килмест

Сарапакасси тата Мокшин ялĕсенче пурăнакансене шăрăх çанталăкра шыв çитменни çинчен калать ял тăрăх пуçлăхĕ. Икĕ ялта пĕр шыв башни кăна пулнипе çакăн пек йывăрлăх siksse тухнă. Аварисем те, шыв пăрăхĕсем шăтни те пулнă çав вăхăтра. Çынсем пахчисене шăварса шыва ытлашши тăкаклани лару-тăрăва йывăрлатнă çеç. Шывпа перекетсĕр усă куракансене сăмахпа та, шыва чарса лартса та витĕм кÿме тăрăшнă. Анчах кăлăхах. Ун пеккисем «Эпир шăвармастпăр», – тесе тÿрре тухма тăрăшнă. Çумăрсем хыççăн лару-тăру лайăхланнине палăртать Павел Николаевич.

«Уйăх каялла Çатракассинче шыв пăрăхĕсен тытăмне юсарăмăр. 36 çул каялла хунă пăрăхсем пĕтĕмпех тутăхса шăтнăччĕ. Чи аварилĕ участокра 206 тăршшĕ çĕнĕ пăрăхсем хутăмăр», – тет Павел Амурцев. Кăçал ял тăрăхĕнче шыв тытăмне çĕнетсе чылай ĕç туса иртттернĕ.

Сарапакасси ял тăрăхĕнчи сакăр ялта шыв башни пур. Вĕсене пăхса тăма вара электрик кирлĕ. Çак ĕçе тепĕр чухне Павел Амурцев хăй çине илет. «Хальлĕхе ял тăрăхĕнчи виçĕ шыв башнине подряд организацийĕ пăхса тăрать. Ытти ялти шыв башнисене те арендăна парасшăн. Малашне пире ĕçлеме çăмăлрах пуласса шанатпăр. Халĕ башньăна тытса тăма халăхран укçа-тенкĕ пухатпăр. Пĕр куб шывшăн 15 тенкĕ тÿлеççĕ. Счетчик вырнаçтарманнисенчен уйăхне пĕр çын пуçне 50 тенкĕ пуçтаратпăр», – ăнлантарать Павел Николаевич.

Пысăк тĕллевсен шутне Пикшик ялĕнчи шыв пăрăхĕсен тытăмне тасатасси те кĕрет. Ку ялта шыв башни те кивĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче тунăскер вăл. «Скважина та, пăрăхсем те пылчăкпа тулса ларнă. Çавăнпа шыв лайăх юхмасть. Скважинăна çĕнĕрен пăрласа тасатмалла», – тет Павел Николаевич. Ял тăрăхĕнчи шыв башнисене сăрлама та палăртнă.



Çынсен пуçарулăхĕ çинче никĕсленнĕ программăна хутшăнса кăçал Колешша ялĕнче çĕнĕ шыв башни лартнă. Проект хакĕ – 338 пин тенкĕ, çынсем 25 пин пухнă. Унччен унта шыв башни пулман. Çынсем çăлтан шыв ăсса пурăннă. Икĕ çул каялла халăх харпăр хăйĕн вăйĕпе кашни киле шыв кĕртнĕ. Анчах башньăсăр тытăм тăкаклăраххипе шыв башнине лартас тенĕ. Санитари зони те пур, башня йĕри-тавра карта тытнă. Скважинăна шыв пăрăхĕсен тытăмĕ çумне сыпăнтармалли çеç юлать.

## Кĕпер тăрăх – машинăпа

Ял тăрăхĕнчи кашни ялтах староста пур. Ял тăрăх пуçлăхĕн вырăнти пулăшуçисем вĕсем. Акă Пикшик ялĕнче пурăнакансем пысăк ĕç туса иртттернĕ. Ял старости Алевтина Улюкина журналистсем килнĕ кун кĕрекене хăнасене пухма хатĕрленетчĕ. Ара, сăлтавĕ те пур. 23 çулти ывăлĕ çартан таврăннă. Дима Улюкин Мытищево хулинче сывлăш техника вăйĕсен çарĕнче хĕсметре тăнă. Мăшăрĕпе алăри кăкăр ачипе урампа утса анаканскерсене курса ытармалла мар. Акă, вăл ял пуласлăхĕ!

«Майăн 1-мĕшĕнче кĕтÿ улăха тухакан шывлă вырăнтан каçса çÿреме йывăçран кĕпер хутăмăр. Ял пĕчĕк пулин те вăтăра яхăн арçын хутшăнчĕ çак ĕçе. Халĕ ун тăрăх машинăпа та каçса кайма пулать», – тет ял старости. Тепĕр кун çынсем çак вырăнтан инçех мар юхса выртакан çăла ял çумнерех пăрăхсем хурса тăснă. Çăлкуçран шыв шăпăртатса юхать. Малашне кунта кану вырăнĕ йĕркелесшĕн. Сак, кĕпейĕм чÿхеме валашка лартасшăн.

«Салам, командир!» – тесе кĕтсе илчĕ ял тăрăх пуçлăхне Шорккари пуçарулла ушкăн. Ял варринчи айлăмра юхса выртакан çăлкуç вырăнĕнчен те шорккасем хăйне евĕр «визитлă карточка» тăвасшăн. Унта анса хăпарма картлашкасем те хунă. Аялта çумăрлă вăхăтра тăма меллĕ пултăр тесе кирпĕчсем хурса хытарнă, йĕри-тавра карта тытнă. Анчах ку палăртнă ĕçсен пĕр пайĕ кăна-ха. «Купель лартасшăн. Эпир тăрăшмасан кам тăвать ĕнтĕ», – тет пĕлтĕр ял старости пулнă Римма Иванова.

Ял тăрăхĕнче 5 кÿлĕ. Вĕсенче шыва кĕме юраманни пирки асăрхаттару паллисем те лартнă. Анчах çынсем çакна курмăш тăваççĕ. Юлашки çулсенче шыв-шур çинче синкерсем пулманнине палăртать ял тăрăх пуçлăхĕ. Çатракассинчи пулăçă Владимир Степанов пĕве пуçĕнче беседка та лартнă. Шыв хĕррине пурте канма çÿреççĕ. Çакăн пек пуçарулла çынсем çинче тăтăнса тăмасть-и-ха ял?

### ПУÇЛĂХ ПУРНĂÇĔНЧИ КĂСĂКЛĂ ФАКТСЕМ

- Павел Амурцев 21 çулта Сарапакасси ял тăрăх пуçлăхĕн çумĕнче ĕçлеме тытăннă. Тепĕр виçĕ çултан, 2012 çулта, халăх ăна пуçлăх пулма шаннă;
- Павел Николаевич çемьеллĕ, мăшăрĕпе хĕрпе ывăл ÿстереççĕ;
- ашшĕ-амăшĕн хуçалăхĕнче пуçлăх вăкăрсем тытать, пысăк лаптăк çинче çĕр улми туса илет;
- пулăра чухне кăна тулли канма пулать тесе шухăшлать. «Пулăра ларнă вăхăт пурнăç шутне кĕмест теççĕ ваттисем», – тет вăл. Иртнĕ çул ятарласа икĕ вăлта туяннă, анчах пушă вăхăт çителĕксĕррипе пĕве хĕрне халĕ те çитеймен-ха.
- пуçлăхăн юратнă апачĕ – яшка. Хăй те вăл пĕçерме кăмăллать.

**РЕДАКЦИРЕН:** Эстафета Çĕньял ял тăрăх пуçлăхне Андрей Михайлова куçать. Ун патне ыйтусене вырăнти халăхран халех йышăнатпăр. Вайбер: **89656874459.**

● КАНАШЛУ



# Наркотик, вӑрӑ ӗҫӗ – ӗненме те йывӑр-ҫке

**Шалти ӗҫсен районти уйрӑмӗн кӑҫалхи ҫур ҫулти ӗҫӗ-хӗлне пӗтӗмлетме республикӑн шалти ӗҫсен министерствин ертӳҫин ҫумӗ – полици пуҫлӑхӗ Александр Смирнов ҫитессе систерчӗҫ те – канашлу залӗнче офицерсем сывлама хӑяймасӑр кӑн та кан пӗр-пӗрин ҫине пӑхрӗҫ: мӗн кӗтмелле? Ларутӑру ведомствӑн районти пайӗн пуҫлӑхӗн Евгений Петровӑн доклачӗ хыҫҫӑн тин таканари шыв пек чӳхенме чарӑнчӗ. Полици полковникӗ йӗркелӗх хуралӗнчи тухӑҫлӑ ӗҫшӗн пурне те тав турӗ.**

Тӗрӗссипе вара ҫак ҫур ҫул шалти ӗҫсен районти пайӗшӗн пӗрре те ҫӑмӑл килмерӗ. Пӗр йыш контракт мелӗпе ҫар тивӗҫне пурнӑҫласа Ҫурҫӗр Кавказран таврӑнчӗ кӑна – Футбол енӗпе тӗнче чемпионатӗнче лӑпкӑлӑха хураллама 12 офицера Хусана ӑсатрӗҫ. Вӗсен йышӗнче ытларахӑшӗ полицин участокри уполномоченнӑйӗсем. Кадрсен ҫитменлӗхӗ ҫапах та шута илнӗ преступленисемпе ҫыхӑннӑ статистикӑна япӑх витӗм кӳмен: вӗсем иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑрпа танлаштарсан 10% чакнӑ та. 10 пин ҫын пуҫне тивекен преступленисен шучӗ те 50-ран 54 таран сахалланнӑ. Криминаллӑ ӗҫ-хӗлпе ытларах кулленхи тупӑшсӑр ҫынсем ҫыхланни паллӑ.

Евгений Владимирович преступленисен чи пысӑк йышӗпе «палӑрнӑ» ял тӑрӑхӗсене асӑнчӗ: Кӳкеҫ тӑрӑхне – 76, Вӑрман-Ҫӗктер тӳпине – 34, Ишлее – 29, Лапсара –26 тивет.

«Хыҫа юлнӑ тапхӑрта 208 преступление уҫса панӑ, анчах та 58 ҫаплипех юлнӑ-ха. Вӗсене тунӑ 133 ҫынна уголовнӑй майпа явап тыттарнӑ. Преступленисене уҫса парасси 78,2 процентпа танлашрӗ. Пӗлтӗр те ҫак шайрахчӗ», – терӗ Евгений Петров. Республикӑра вара ҫак кӑтарту 75,7% тан.

Шупашкар район прокурорӗн ҫумӗ Рафил Ахмадуллин уйрӑмах йывӑр преступленисене пӳлес енӗпе ҫине тӑрса ӗҫлеме сӗнчӗ. Наркотиксен саккуна хирӗҫле ҫаврӑнӑшӗпе ҫыхӑннисем акӑ 3 хут ӳснӗ – 6-ран 18 таран. Ют регион ҫыннисем район территорийӗсенчи вӑрттӑн вырӑнсенче наркотик хутӑшӗсем хура-хура хӑвараҫҫӗ. Юлашки уйӑхра кӑна ҫакӑнпа ҫыхӑннӑ 6 уголовнӑй ӗҫе пуҫарнӑччӗ. Чи хӑрушши – ҫак хура ӗҫе ҫамрӑксене явӑҫтарни. Вӗсем тунӑ преступленисем ахаль те 4-ран 14 таран ӳснӗ – тӑххӑрӑшӗ йывӑр ушкӑнрисем. Ют пурлӑха хапсӑнаҫҫӗ, саккуна пӑсса наркотиклӗ хутӑшсем упраҫҫӗ, транспорт хатӗрӗсене вӑрласа тараҫҫӗ, ҫын сывлӑхне сӑтӑр кӳреҫҫӗ вӗсем – ӗненме те йывӑр! Ҫул ҫитмен ҫамрӑксем тӗлӗшпе кӑҫалхи ҫур ҫулта кӑна ҫак сӑлтавсемпе 7 уголовнӑй ӗҫ пуҫарнӑ. Пӗлтӗр ҫак тапхӑрта икӗ ҫамрӑка суд сакки ҫине лартнӑ.

Район ҫыннисем халӑх йышлӑ пухӑнакан вырӑнсенче преступлени тума шикленеҫҫӗ. Кунта «Хӑрушлӑхсӑр хула» программӑпа килӗшӳллӗн ӗҫлекен видеосӑнав витӗмне чи малтан палӑртмалла. Пӗлтӗрхи ҫур ҫулта 45 преступлени шута илнӗ пулсан, кӑҫал – 34. Вӑрӑсем Интернет уҫлӑхӗнче хуҫаланма пуҫланине пӗлтермест-и-ха ҫакӑ? Унпа усӑ курса ют пурлӑха вӑрланӑ 9 тӗслӗхе шута илнӗ кӑҫал, мобильлӗ ҫыхӑну урлӑ – 6. Ҫынна курмасӑрах вӑрӑсем шӑнман пӑр ҫине ытларах та лартса яма пултарнӑ. Полици ӗҫченӗсем ҫакӑн пек 7 ӗҫе чарнӑ, улталаса банк картти ҫинчен укҫа куҫарма хӑтланнӑ 8 тӗслӗхре вӑхӑтра мерӑсем йышӑнса ӗлкӗрнӗ.

Ниҫта та ӗҫлемен ҫынсем тунӑ преступленисен шучӗ пӗлтӗрхи ҫур ҫулта 160 пулнӑ, кӑҫал – 105. Унччен судпа айӑпланнисем те саккун чаракӗ урлӑ 37% чухлӗ сахалрах утса каҫнӑ: ку кӑтарту пӗлтӗрхи 154-ран 97 таран чакнӑ. Ӳсӗр ҫынсем вара саккуна пӑсса йӗркелӗх хуралҫисен куҫӗ тӗлне ҫав-ҫавах пӗлтӗрхи шайрах ҫакланаҫҫӗ – 69. Иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑрта вӗсем тунӑ преступленисен шучӗ 78 пулнӑ. Ҫакӑнта халӑх йышлӑ пухӑнакан уявсен кунӗсенче район территорийӗнче алкоголь сутма чарнин витӗмне палӑртмалла. Ҫав кунсенче лӑпкӑлӑх хуралӗнче тӑракан полици ӗҫченӗсем йӗркене пӑснӑ тӗслӗхсене вӑхӑтра пӳлнӗ, пӗр преступление те шута илмен. Район администраци пуҫлӑхӗ Владимир Димитриев канашлӑва хутшӑннӑ офицерсене пурне те ҫакӑншӑн тав турӗ.

Министр ҫумӗ Александр Смирнов Чӑваш Ен ШӖМӗ уйрӑмах йывӑр преступленисене уҫса парас енӗпе Раҫҫейре чи малти вунӑ регион йышне кӗнине палӑртрӗ. «Кунта вара хула ҫумӗнчи муниципалитетра йӗркелӗх хуралӗнче ҫӑмӑл мар условисенче тӑракан Шупашкар районӗн шалти ӗҫсен пайӗн кашни офицерӗн тӳпи те пур», – терӗ вӑл.

**ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ**

● ҪУЛ ҪИНЧЕ

# Водитель, ан ӗҫ, ан тар!

**Ӳсӗр водителӗн аллинче руль мар, граната тейӗн. Ҫул ҫинче унран мӗн кӗтмеллине пӗлеймӗн.**

Ҫак кунсенче акӑ Ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑхӗн патшалӑх инспекцийӗн экипажӗ тата тепӗр ҫакӑн пек яваплӑх туйӑмӗсӗр ҫынна тытса чарнӑ. «Жигулин» 14-мӗш моделӗн водителӗ пакунлисене курсан пӗр-икӗ сӑмах та ҫыхӑнтарайман, эрех ӗҫнӗ хыҫҫӑн руль умне ларма вара хӑюлӑх ҫитернӗ. Шупашкар район прокуратури урлӑ илнӗ информацирен вӑл ҫул-йӗр правилисене унччен те пӑсни паллӑ. Юлашкинчен – РФ КоАПӗн 12.16 статйин 1-мӗш пайӗпе – хӑрушсӑрлӑх пиҫиххийӗпе ҫыхӑнманшӑн. Штрафа уншӑн та тӳлесе татман. Халӗ вара, ахӑртнех, йӗркелӗх хуралӗн органӗ унӑн водитель правине туртса илессишӗн ҫине тӑрӗ.

Ӳсӗр водительсене пула кӑҫалхи ҫур ҫулта район территорийӗнче пӗр аварие шута илнӗ те ӗнтӗ. Иртнӗ ҫул инкекре ҫынсем шар курман пулсан, кӑҫал ӳсӗр водитель айӑпӗпе ҫул-йӗр инкекӗнче пӗр ҫын вилнӗ, 4 суранланнӑ.

Пӗтӗмпе вара 2018 ҫулхи январь-июнь уйӑхӗсенче Шупашкар районӗнче 48 ҫул-йӗр инкекӗ пулнӑ. Вӗсенче ултӑ ҫын вилнӗ, 66-шӗ суранланнӑ. Иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртипе танлаштарсан аварисен шучӗ 2,04% чакнӑ, вилнисем 20% сахалрах, суранланнисем 10,8% пӗчӗкленнӗ – пӗлтерет ЧР Ҫул-йӗр патшалӑх инспекцийӗн Шупашкар районӗнчи уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Юрий Поляков. Аварисем ытларах «Мускав-Ӗпхӳ» автоҫул ҫинче (24 тӗслӗх) пулнӑ, вӗсенче виҫӗ ҫын вилнӗ, 33-шӗ суранланнӑ.



Ҫуран ҫӳрекенсем ҫул-йӗр правилисене пӑснипе пӗлтӗр ҫак тапхӑрта 3 авари шута илнӗ пулсан, кӑҫал – 9. Вӗсенче ҫуран ҫӳрекен 4 ҫын вилнӗ, 5 суранланнӑ. Ачасем хутшӑннипе 5 ҫул-йӗр инкекне шута илнӗ, вӗсенчен пӗри – пӗчӗк пешеход айӑпӗпе.

Яваплӑхран хӑраса авари вырӑнӗнчен тарнӑ тӗслӗхсем те пур. Иртнӗ ҫул ҫакӑн пек лару-тӑрура икӗ водитель пӑрахса кайнӑ, кӑҫал ун пеккисем 4-ӑн пулнӑ.

Статистикӑна пӑхас пулсан эрнекун, шӑматкун тата тунтикун чи авариллӗ кунсем. Ҫурҫӗр хыҫҫӑн ирхи ултӑ сехетчен чи лӑпкӑ вӑхӑт – талӑкӑн ҫак сехечӗсенче аварисем ҫукпа пӗрех.

Ҫул-йӗр инкекӗшӗн пур чухне те ҫын айӑплӑ мар. Хӑш-пӗр чухне пахалӑхсӑр ҫул та инкек сӑлтавӗ пулса тӑрать. Акӑ кӑҫалхи 5 уйӑхра хӗлле ҫула тивӗҫлӗ шайра пӑхса тӑманнипе 3 авари пулнӑ, ҫула уйӑракан горизонтальлӗ йӗр пулманнипе – 7.

**МИЛЕНА СЕРГЕЕВА**

## Телепрограмма Матч ТВ с 16 по 22 июля

### ПОНЕДЕЛЬНИК, 16 ИЮЛЯ

**6.30, 9.00** «По России с футболом» **12+**
**7.00, 8.55, 10.10, 13.15, 15.05, 17.00** Новости
**7.05, 10.15, 15.10, 23.00** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**9.30** «Комментаторы. Live» **12+**
**9.40** «Город живёт футболом» **12+**
**10.45, 23.30** «Чемпионат мира. Live» **12+**
**11.15, 2.05** Футбол. Чемпионат мира- **2018** г. Матч за **3**-е место. Трансляция из Санкт-Петербурга
**13.25** Водное поло. Чемпионат Европы. Мужчины. Россия - Словакия. Прямая трансляция из Испании
**14.35, 4.35** «Эмоции ЧМ **2018»** **12+**
**16.00, 4.05** «ЧМ **2018** в цифрах» **12+**
**16.30** Обзор Чемпионата мира. Путь к финалу **12+**
**17.05** Футбол. Чемпионат мира- **2018** г. Финал. Трансляция из Москвы
**19.40** Тотальный футбол
**21.00** Д/ф «Россия-**2018** - навсегда» **12+**
**22.00** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. **1/4** финала. А. Усик против М. Хука. Трансляция из Германии **16+**
0.00 **«БОЛЬШОЙ ЧЕЛОВЕК»** 16+

### ВТОРНИК, 17 ИЮЛЯ

**6.30** «По России с футболом» **12+**
**7.00, 8.55, 13.20, 14.25, 16.05, 18.00, 21.55** Новости
**7.05, 14.30, 18.10, 23.00** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**9.00** «Город футбола: Волгоград» **12+**
**9.20** Футбол. Чемпионат мира- **2018** г. Финал. Трансляция из Москвы
**12.00** Тотальный футбол **12+**
**13.25** Д/ф «Россия-**2018** - навсегда» **12+**
**14.55** Водное поло. Чемпионат Европы. Женщины. Россия - Германия. Прямая трансляция из Испании
**16.15** Смешанные единоборства. М-**1** Challenge. А. Дамковский против Д. Исмагулова. Трансляция из Оренбурга **16+**
**19.00** «Наш ЧМ. Тенденции» **12+**
**20.00** ЧМ **2018** г. Вспомнить всё. Прямой эфир
**21.25** «Эмоции ЧМ **2018»** **12+**
**22.00** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. **1/2** финала. М. Бриедис против А. Усика. Трансляция из Латвии **16+**
**23.30** «Чемпионат мира. Live» **12+**
23.50 **«ПОЛИЦЕЙСКАЯ ИСТОРИЯ»** 12+
**1.50** «Лица ЧМ **2018»** **12+**

### СРЕДА, 18 ИЮЛЯ

**11.00, 11.40, 15.15, 17.20, 19.20, 20.35** Новости
**11.10, 17.25, 20.40, 23.00** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**11.45** Футбол. Чемпионат мира- **2018** г. **1/4** финала. Россия - Хорватия. Трансляция из Сочи
**14.45, 21.40** «Россия. Как появляется надежда» **12+**
**15.25** Дзюдо. Чемпионат Европы среди смешанных команд. Трансляция из Екатеринбурга
**18.20** «Российский футбол. Итоги сезона» **12+**
**18.50** «Футбольные каникулы. ФК «Оренбург» **12+**
**19.25** Водное поло. Чемпионат Европы. Мужчины. Россия - Сербия. Прямая трансляция из Испании
**22.10** «История одной сборной» **12+**
**22.30** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. **1/4** финала. М. Гассиев против К. Влодарчика. Трансляция из США **16+**
**23.30** «Чемпионат мира. Live» **12+**
0.00 **«ПОЛИЦЕЙСКАЯ ИСТОРИЯ. ЧАСТЬ 2- Я»** 16+
**2.20** Футбол. Чемпионат мира- **2018** г. Финал. Трансляция из Москвы

### ЧЕТВЕРГ, 19 ИЮЛЯ

**6.30** «По России с футболом» **12+**
**7.00, 8.55, 11.35, 13.55, 15.25, 19.40, 21.15** Новости
**7.05, 11.40, 14.00, 18.55, 23.05** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**9.00** «Город футбола: Екатеринбург» **12+**
**9.20, 23.35** «Чемпионат мира. Live» **12+**
**9.50** Смешанные единоборства. Bellator. П. Фрейре против Д. Вайхеля. А. Корешков против В. Бакочевича. Трансляция из Италии **16+**
**12.10** Смешанные единоборства. Bellator. Д. Бадд против Т. Ногейры. Э. Дантас против М. МакДональда. Трансляция из США **16+**
**14.55** «Россия. Как появляется надежда» **12+**
**15.30** «Футбольные каникулы. ФК «Крылья Советов» **12+**
**16.00** Т/с «ОБЕЩАНИЕ» **16+**
**17.55** «Наш ЧМ. Тенденции» **12+**
**19.45, 5.35** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. **1/2** финала. М. Гассиев против Ю. Дортикоса. Трансляция из Сочи **16+**
**20.50** «Гассиев vs Усик» **16+**
**21.25** Водное поло. Чемпионат Европы. Женщины. Россия - Венгрия. Прямая трансляция из Испании
**22.35** М. Гассиев с А. Ягудиным **12+**
0.05 **«НОВАЯ ПОЛИЦЕЙСКАЯ ИСТОРИЯ»** 16+

### ПЯТНИЦА, 20 ИЮЛЯ

**6.30** «По России с футболом» **12+**
**7.00, 8.55, 11.50, 13.30, 15.00, 19.05, 20.45** Новости
**7.05, 15.05, 17.30, 20.50, 23.00** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**9.00** Футбольное столетие **12+**
9.30 **«УЛИЧНЫЙ БОЕЦ»** 12+
**11.20** «Трудности перевода» **12+**
**11.55, 15.55** ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Германии. Свободная практика. Прямая трансляция
**13.35** Кикбоксинг. «Жара Fight Show» Сергей Харитонов против Ф. Синистры. З. Самедов против Ф. Кемайо **16+**
**15.25** «Футбольные каникулы. ФК «Оренбург» **12+**
**17.55** Водное поло. Чемпионат Европы. Мужчины. Россия - Румыния. Прямая трансляция из Испании
**19.10** Пляжный футбол. Евролига. Россия - Азербайджан. Трансляция из Москвы
**20.15** «Путь чемпиона» **12+**
**21.35** Лучшие поединки Мурата Гассиева **16+**
**22.35** Всемирная Суперсерия. Гассиев vs Усик. Перед боем? **16+**
23.30 **«ВОИН»** 16+
2.15 **«ДОБЕЙСЯ УСПЕХА»** 16+

### СУББОТА, 21 ИЮЛЯ

**6.30** «Чемпионат мира. Live» **12+**
**7.00** Все на Матч! События недели **12+**
**7.50** Д/ф «Россия-**2018** - навсегда» **12+**
**8.50** Автоспорт. Ралли «Шёлковый путь»
**9.10, 11.20, 15.25** Новости
**9.20** Футбол. Международный Кубок чемпионов. «Манчестер Сити» - «Боруссия» (Дортмунд, Германия). Трансляция из США
**11.25** Автоспорт. Российская серия кольцевых гонок. «Казань Ринг» Туринг. Прямая трансляция
**12.30** Всемирная Суперсерия. Гассиев vs Усик. Перед боем **16+**
**12.55** ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Германии. Прямая трансляция
**14.00** Лучшие поединки Мурата Гассиева **16+**
**15.00** «Гассиев vs Усик» **16+**
**15.30, 20.05, 1.15** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**15.55** ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Германии. Квалификация. Прямая трансляция
**17.00** Футбол. Международный Кубок чемпионов. «Бавария» - ПСЖ. Прямая трансляция из Австрии
**19.00** Пляжный футбол. Евролига. Россия - Польша. Трансляция из Москвы
**21.00** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. Финал. М. Гассиев против А. Усика. Бой за титул абсолютного чемпиона мира в первом тяжелом весе. Прямая трансляция из Москвы
**1.45** Водное поло. Чемпионат Европы. Женщины. Россия - Испания. Трансляция из Испании

### ВОСКРЕСЕНЬЕ, 22 ИЮЛЯ

**6.30** Все на Матч! События недели **12+**
**6.50** Футбол. Товарищеский матч. «Бенфика» (Португалия) - «Севилья» Трансляция из Швейцарии
**8.50** Автоспорт. Ралли-рейд «Шёлковый путь»
**9.10** «Путь чемпиона» **12+**
**9.40, 11.20, 12.30, 15.05, 18.15** Новости
**9.45** Смешанные единоборства. М-**1** Challenge. «Битва в Горах» Трансляция из Ингушетии **16+**
**11.25** Автоспорт. Российская серия кольцевых гонок. «Казань Ринг» Туринг. Прямая трансляция
**12.35** Профессиональный бокс. Всемирная Суперсерия. Финал. М. Гассиев против А. Усика. Бой за титул абсолютного чемпиона мира в первом тяжёлом весе. Трансляция из Москвы **16+**
**14.35** «Футбольные каникулы. ФК «Крылья Советов» **12+**
**15.10, 0.00** Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
**15.50** ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Германии. Прямая трансляция
**18.25** Пляжный футбол. Евролига. Россия - Швейцария. Прямая трансляция из Москвы
**19.25** Международный день бокса. Сборная России - Сборная Германии. Трансляция с Красной площади
**21.00** Смешанные единоборства. UFC. М. Руа против Э. Смита. М. Тыбура против С. Струве. Прямая трансляция из Германии
**0.30** Футбол. Международный Кубок чемпионов. «Ливерпуль» - «Боруссия» (Дортмунд, Германия). Трансляция из США

**Пластиковые ОКНА**
**от 2800 руб за деревенское окно, утепленное в три стекла.**
**Летние суперцены.**
Скидки до 50%.
Заводское качество.
Немецкая фурнитура.
☎ 8-927-668-69-55. 04-68



**Кровельные и фасадные работы.**
**СРУБЫ для дома и бани.**
**Доставка, Монтаж.**
**Тел.: 8-927-667-03-55.** 07-10

**Кредитная помощь и консультация на выгодных условиях, даже с плохой К.И.**
**Тел.: 8 (495) 929-71-07.** 06-14

**МОДУЛЬНАЯ РЕКЛАМА**
**1 кв. см. – от 26 руб.**

Московское юридическое бюро «Главная дорога».
Волжское отделение.
**Досрочный возврат водительских удостоверений в судебном порядке.**
**Без пересдачи теории по окончании срока.**
В т.ч. по амнистии. Официально. Конфиденциально.
**8-800-200-14-01 звонок бесплатный, +7 84320 7 14 06.** 05-52

**Доставка торф, грунт, песок, ОПГС, щебень, кирпичный бой, гравий.**
**Тел.: 8 960 300 42 42.** 04-42

**ПРОДАЮ**
**гравмассу, песок, щебень, бой бетона и кирпича (доставка от 1 до 15 т, а/м ЗИЛ, КАМаз), цемент М-400, М-500.**
☎ 8-927-849-76-75. 05-61

**ООО «ТМ»**



**ПРОИЗВОДИМ И ДОСТАВЛЯЕМ БЫСТРО, КАЧЕСТВЕННО, С ГАРАНТИЕЙ**
**ПРОФНАСТИЛ**
**ДЛЯ КРЫШ И ЗАБОРОВ оцинкованный и с полимерным покрытием разных цветов**
**МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА «МОНТЕРРЕЙ»**
**Производство** на новом современном оборудовании
**Изготовление** по размерам Заказчика, а также:
■ **доборные элементы на заказ;** ■ **трубы профильные**
■ **крепеж в ассортименте;** ■ **евроштакетник для забора цветной металлический**
ЗАЯВКИ ПО ЗВОНКУ. ОПЛАТА ПРИ ДОСТАВКЕ.
**89524659723; 89290427904;**
**тел/факс: 8(83174) 2-86-05.**
**ДОСТАВКА 1000 рублей**
**ЭЛ. ПОЧТА: ooo-tm1@mail.ru, САЙТ: profil-tm.ru** 05-71

**ПАМЯТНИКИ от 2200 рублей**
**АО «Базальт»** г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает **ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.**
● Столики, скамейки, ограды, венки.
● СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.
**ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.**
☎ **8 (8352) 56-29-68.** 04-01

**КЕРАМБЛОКИ, КОЛЬЦА КОЛОДЦЕВ. НАВОЗ, ПЕСОК, ОПГС, ЩЕБЕНЬ, КИРПИЧ, БЕТОН.**
Бурение. **Доставка.** В мешках.
**Т. 8919 671 68 11.** 07-07

**ПРОДАЮ**
**к/б блоки, доски, кирпич, профнастил, цемент, песок, гравмасса, арматура.**
**Услуги манипулятора.**
**8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.** 04-58

**КОЛЬЦА КОЛОДЦЕВ Ж/Б**
**D-0,7; 1,0; 1,5.**
■ БУРЕНИЕ КОЛОДЦЕВ, КАНАЛИЗАЦИЙ И СКВАЖИН
■ К/Б БЛОКИ ОТ ПРОИЗВОДИТЕЛЯ
**20х20х40; 30х20х40; 12х20х40**
**ДОСТАВКА**
**Тел.: 8-902-327-82-52.** 05-03

**04-41.** **Ремонт ТНВД и CR-форсунок. Тел.: 8-960-300-42-42.**

**06-46.** **Монтаж электропроводки, счетчиков. Тел.: 8-937-015-35-40.**

**Сдаю в аренду сельскохозяйственные земли от 1 до 80 га.**
**Тел.: 8-902-327-33-55.** 07-08

**СУТАТПĂР**
**ПРОДАЕМ**

**07-14.** **БЕТОН В П. АТЛАШЕВО. Тел.: 8-908-303-05-03.**

**05-16.** **Доставка: песок, гравмасса, щебень изв. Тел.: 8-927-665-72-32.**

**06-47.** Кирпич - любой, керамблоки. Тел.: 8-927-667-83-78.

**07-13.** **Месячных бычков по 10000 руб. Доставка. Тел.: 8-903-359-79-62, 8-919-669-01-71.**

**06-10.** ПОРОСЯТА. 3000-3500. Тел.: 8-960-311-22-86, 8-937-376-37-77, 8-960-304-52-90.

**06-55.** Куры-молодки, утята, муларды, гусята, индюки, бройлеры. Доставка. Тел.: 8-905-029-90-50.

**ТУЯНАТПĂР**
**КУПИМ**

**05-14.** **Куплю бычков, коров, телок. Дорого. Тел.: 8-905-197-61-66.**

**05-82.** Коров, бычков, телок. Вынужденный забой. Тел.: 8-927-851-27-77.

**06-09.** **Старые подушки, перины. Пух гусиный и утиный. Тел.: 8-999-609-50-32.**

**06-61.** Покупаю банные веники. Тел.: 8-987-579-84-19.

**ПУЛĂШУ**
**УСЛУГИ**

**04-51.** **Вывоз мусора. Доставка песка, гравмассы, щебня. Тел.: 8-927-841-39-61.**

**05-02.** Выполним все строительные, сварочные работы со своим материалом. Тел.: 8-987-126-30-07.

**06-19.** Очистка колодцев. Тел.: 8-927-847-37-25.

**06-62.** **Пластиковые ОКНА и ДВЕРИ от 2900 руб./м2. Пенсионерам скидка. Тел.: 8-927-844-78-11.**

**ХУРЛАНАТПĂР**
**СОБОЛЕЗНУЕМ**

«Приволжское» АО ĕҫченĕсем пĕрле ĕҫлекен Самойлов Владимир Александровичăн амăшĕ
**Римма Ивановна САМОЙЛОВА**
вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле хурланнине пĕлтереҫҫĕ. 07-17

**07-22.** Администрация Сирмапосинского сельского поселения сообщает, что объявленный распоряжением администрации Сирмапосинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики от 04.06.2018 №19 на 11 июля 2018 года аукцион по продаже в собственность земельных участков, расположенных на территории Сирмапосинского сельского поселения, был признан несостоявшимся в связи с тем, что на участие в аукционе не было подано ни одной заявки.



**РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲ**
8(83540) **2-12-59**

● КУЛЬТУРА

# На ярмарку – с песнями

**7 июля на ярмарочной площади г. Цивильск в рамках Тихвинской ярмарки состоялся Межрегиональный фестиваль фольклорных коллективов «Туслăх кăшăлĕ», посвященный 105- летию известной собирательницы и исполнительницы чувашских народных песен Ираиды Вдовиной.**



В нем принял участие фольклорный коллектив «Тарават» Чиршкасинского дома культуры. Фольклорный коллектив «Тарават» и работники Чиршкасинского Дома молодежи гостеприимно были приняты в импровизированном дворике, где их приветствовала глава Чиричкасинского сельского поселения Цивильского района Валентина Иванова. Хозяева угощали вкусным жарким, приготовленным на открытом огне, домашним квасом, свежими овощами с огорода, домашними солениями, приготовленными по традиционным чувашским рецептам.

Также в праздновании Тихвинской ярмарки принял участие фольклорный ансамбль «Шурăмпуҫ» Шобашкаркасинского клуба Вурман-Сюктерского сельского поселения.

Команда по мини-футболу из д. Шорчекасы Акулевского сельского поселения заняла II место на турнире по пляжному мини-футболу на Цивильской ярмарке. ■

● СЕЛЬСКОЕ ХОЗЯЙСТВО

# Трипса в теплицах нет

**Специалисты Управления Россельхознадзора по Чувашской Республике и Ульяновской области по заявке ЗАО Агрофирма «Ольдеевская» провели фитосанитарные обследования теплиц на выявление карантинных вредителей закрытого грунта. Об этом сообщается на сайте Управления.**

В ходе обследования посадок огурцов в период вегетации было вывешено 809 цветных клеевых ловушек и 20 цветных ловушек с синтетическим феромоном для выявления вредителей: западного цветочного (калифорнийского) трипса, табачной белокрылки, трипса Пальми, южноамериканского листового минера. Учет насекомых проводился не реже одного раза в 5 дней. Специалисты обследовали четыре отделения теплиц на площади 9 га при помощи ловушек и 11 га – визуально. Отобранные в ходе карантинного фитосанитарного обследования вегетативные части растений и образцы насекомых проанализированы в отделе фитосанитарии и карантина растений по Чувашской Республике «ФГБУ Татарская МВЛ». Карантинные организмы не выявлены.

В агрофирме с 2008 по 2017 годы была установлена карантинная фитосанитарная зона и карантинный фитосанитарный режим по западному цветочному (калифорнийскому) трипсу. В августе 2017 года зона была упразднена и карантинный фитосанитарный режим отменен.

Для выявления очагов карантинных объектов, предотвращения их проникновения и распространения на территории агрофирмы выпущены энтомофаги: макролофус, амблисейус, фитосейулюс, афидиус, ориус против вредителей закрытого грунта. Ежегодно проводятся систематические карантинные фитосанитарные обследования подкарантинного объекта. ■

● ФНС СООБЩАЕТ

**Тема уголовной ответственности за уклонение от уплаты налогов сейчас актуальна как никогда и касается каждого индивидуального предпринимателя и руководителя организации, которые недобросовестно подходят к уплате налогов.**

К уголовной ответственности за налоговые преступления могут привлечь в следующих случаях:

1. Уклонение физического лица от уплаты налогов, сборов и (или) физического лица – плательщика страховых взносов от уплаты страховых взносов (статья 198 УК РФ)

Ответственность физического лица наступает за деяния совершенные путем непредставления налоговой декларации (расчета), либо путем включения в налоговую декларацию (расчет) заведомо ложных сведений, совершенные в крупном размере (составляющая за период в пределах трех финансовых лет подряд более 900 тыс. руб., при условии, что доля неуплаченных налогов, сборов, страховых взносов превышает 10 % подлежащих уплате, либо превышающая 2700 тыс. руб.).

2. Уклонение от уплаты налогов с организации (статья 199 УК РФ)

Это самая «жесткая» статья для руководителя компании. Чаще всего ответственность директора по этой статье наступает за непредставление налоговых деклараций либо искажение данных отчетности, то есть занижение доходов или завышение расходов, налоговых вычетов. Причем, если речь идет о руководителе нескольких компаний, то его вина будет оцениваться в совокупности по сумме недоплаченных в бюджет налогов каждой организацией. Неуплата определяется за период в пределах трех финансовых лет подряд в сумме более 5 млн. руб., при условии, что доля неуплаченных налогов, сборов, страховых взносов превышает 25% подлежащих уплате сумм налогов, сборов, страховых взносов в совокупности, либо превышающая 15 млн руб.

3. Неисполнение обязанности налогового агента (статья 199.1 УК РФ)

В этой статье речь идет об ответственности за неисполнение в личных интересах обязанностей налогового агента по исчислению, удержанию или перечислению в бюджет НДФЛ, удержанного с сотрудников. Сумма определяется за период в пределах трех финансовых лет подряд более 5 млн руб., при условии, что доля неуплаченных налогов, сборов, страховых взносов превышает 25 % подлежащих уплате сумм налогов, сборов, страховых взносов в совокупности, либо превышающая 15 млн. руб.

4. Сокрытие денежных средств либо имущества, за счет которого должно производиться взыскание налогов (статья 199.2 УК РФ)

Ответственность руководителя по этой статье будет тогда, когда будет доказана его вина в умышленном сокрытии денежных средств и прочего имущества, за счет которых должно производиться взыскание налогов с организации. Например, компания имеет задолженность по налогам, но при этом представляет отсрочку покупателям по отплате товаров или выдает займы.

Исходя из примечания к ст. 170.2 УК РФ под крупным размером в данном случае следует понимать сумму, превышающую 2 250 тыс. руб., а особо крупным – 9 млн руб.

5. Незаконное возмещение НДС из бюджета может быть квалифицировано по «общеуголовной» статье 159 УК РФ (мошенничество)

Указанная статья применяется при незаконном возврате НДС из бюджета, так как в этом случае виновное лицо умышленно, путем обмана получает право на чужое имущество. Поскольку при этом представляются фиктивные документы, в том числе декларации, то хищение осуществляется путем обмана. Крупным размером признается стоимость имущества, превышающая двести пятьдесят тысяч рублей, а особо крупным - один миллион рублей.

По этой статье с учетом совершенного деяния по соответствующей части максимально возможное наказание – это лишение свободы на срок до 10 лет и штраф до 1 млн. руб.

Как исключить привлечение к уголовной ответственности?

■ своевременно и в полном объеме оплачивать задолженность по налогам и исполнять требования налоговых органов;

■ организовывать грамотное налоговое планирование;

■ проводить мониторинг изменения в налоговом, уголовном и уголовно-процессуальном законодательстве;

■ принимать участие в проводимых налоговыми органами семинарах;

■ отказаться от участия в сомнительных сделках.

Таван Ен

**Учредитель (соучредители):** Министерство цифрового развития, информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Тăван Ен» Министерства цифрового развития, информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

**Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики**

Выходит по четвергам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступает в переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель. Материалы в рубрике «Экономика хăвачĕ» публикуются платно.

При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru.

Подписной индекс газеты **П6022**

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Тăван Ен» Мининформполитики Чувашии**
**429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13**
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-12-59, 8(8352) 20-10-85**

**Тел. для справок** – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни – **8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы **– 8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-71,** | рекламы и подписки **– 8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 20-10-85,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-85.**

**Прием объявлений и рекламы, подписка** с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора
**В.А. ВЫШИНСКАЯ**

Дежурный по номеру
**А.В. ТИХОНОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăватпăр», публикуются на платной основе.

**© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.**

Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 11.07.2018 г.
Дата выхода в свет: 12.07.2018 г.

Тираж **2502 экз.**
Заказ № 2107
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

Цена свободная

Чи паха парне мĕн хак?
«Тăван Ен» хаçатри, www.tavanen.ru сайтри салам чухлĕ! 500 тенкĕ! Квитанципе 40% йӳнĕрех.

# «Хĕрарăм куçĕ тĕслĕ тĕнче»

● ӲНЕР

**Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейра çакăн пек ятпа çĕнĕ курав ĕçлеме пуçларĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлта, пирĕн ентешĕн, летчик-космонавтăн тăван ялĕнче, пĕлтĕрхи август уйăхĕнче иртнĕ тăххăрмĕш пленэра хутшăннă чăваш хĕрарăм-художникĕсен ĕçĕсенчен тăрать вăл. Курава авиаци генералĕ, Раççейĕн икĕ хут Геройĕ Андриян Николаев уçлăха вĕçнĕренпе 55 çул çитнине халалланă.**



Чăваш художникĕсен союзĕн членĕсен Валентина Ильинан, Светлана Кокелĕн, И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУн художествăпа графика факультетĕнчен вĕренсе тухнă Ксения Кокелĕн ячĕсемпе пĕрлех курава СССР, Раççей художникĕсен пĕрлешĕвĕсен членĕсен Венера Сандамировăпа Алла Ибрагим ĕçĕсене те тăратнă.

Пленэр пирки Светлана Васильевна Кокель аса илсе каласа пачĕ: «2017 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕччен 19 хĕрарăм-художникпе эпир Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрпуç ялĕнче пурăнтăмăр. Вăл Шуршăлтан инçех мар вырнаçнă. Вырăнти халăх пире çăкăр-тăварпа, юрă-кĕвĕпе кĕтсе илчĕ». Пир, рамăсем пĕрре те йӳнĕ мар хальхи вăхăтра. Çул çӳрев валли те укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Çавăнпа та художник пулас тивĕçе çак профессие чунтан парăннисем кăна суйлаççĕ. Ку йышра та преподавательсем, пенсионерсем, студентсем. Куравра пур ĕçе те кăтартман-ха – çапах 200 пуçтарăннă. Светлана Васильевна çавăн пекех ушкăн кăçал Тутарстанри Кăнна Кушкинче, чăвашсене çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлевăн тăван ялĕнче те пулнине пĕлтерчĕ. Пленэра унăн 170 çулхи юбилейне халалланă.

Хĕрарăм-художниксен пленэрне Валентина Ильина иккĕмĕш хут хутшăнать.

«Çакăн пек пĕрлешĕве шыраса тупнăшăн питĕ савăнтăм. Кунта урăхла сывлăш хуçаланать, кунта пурте пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Çапах та картина мĕнле пуласси художник характерĕпе тавра курăмĕнчен тата ăсталăхĕнчен кăна килет», – пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшкăмăлне.

Çак ĕçсене курсан эпир «илем чуна сиплениине», чăваш çĕршывĕ хăйĕн паттăр ывăлĕсене тивĕçлине ăнланатпăр. Вĕсене ӳкерме этемлĕхĕн черчен çуррийĕн пултаруллă йышĕ пастельпе, кăмрăкпа, акварель сăрăпа усă курнă. Кунта Шуршăл такăрлăкĕсемпе, уйри чечек çыххисен илемĕпе, истори вырăнĕ пулса тăнă сала хĕрарăмĕсен портречĕсемпе киленме май пур.

■ ЮЛИЯ ЛЮБИМОВА

ШУХĂШ

**Светлана КОКЕЛЬ,**
«Хĕрарăм куçĕ тĕслĕ тĕнче» курав йĕркелӳçи:

– Пленэрсем йĕркелесси ытти республикăра анлă сарăлнă. Хĕрарăм-художниксене пухас шухăш ăнсăртран çуралмарĕ, мĕншĕн тесен эпир пĕр-пĕринпе кирек мĕн çинчен те ирĕклĕн каласма пултаратпăр. Каçсерен юрăсем юрлатпăр, сăвăсем вулатпăр. Пленэрсенче эпир апатчен е ун хыççăн тăватшар сехет ӳкеретпĕр. Çак вăхăтран ытларах май çук – çутă урăх енчен ӳкет, мĕлке чăрмантарать. Малалла вара ĕçе мастерскойра вĕçлетпĕр. Хăш-пĕр чухне этюд валли икĕ сехет те çителĕклĕ.

● ФОРУМ

## Сувенир ăçта ăсталама вĕрентеççĕ?



Вăрман-Çĕктер тăрăхĕнчи Станьял çывăхĕнчи Чемен Карти туристсемшĕн, культурăпа йышлă спорт мероприятийĕсене юратакансемшĕн юлашки вăхăтра иккĕмĕш кил вырăннех пулса тăчĕ. Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕн ертӳçи Сергей Сорокин меценат хăйĕн вăйĕпе туса лартнă краеведенипе туризм центрĕнче уяв хыççăн уяв кĕрлет. Чăвашсен тĕрлĕ регионри диаспорисене пухнă Хăравути Пуххине ăсатсанах Чемен Картине республика çамрăкĕсем йышăнчĕç. Июлĕн 5-9-мĕшĕсенче кунта «СгущОNка» регионсен хушшинчи вĕрентӳ форумĕ иртрĕ.

Туристсен лагерĕ çамрăксене хăйсен пултарулăхĕсене туллин кăтартма çул уçрĕ. Музыка, литература, хореографи, театр, киноискусство, илемлĕ искусство, урбанистика тата проектсене пурнăçа кĕртесси – форум ĕçĕ темисçе енпе те йĕркеленсе пычĕ. Кăçал унта çĕре яхăн çын хутшăнчĕ. Экспертсем – Михаил Маюшкин поэт, актер, лингвист, педагог, «Сингл» студи ертӳçи Вероника Арисова юрăç, «Бабушка Пушкина» телепроектăн пăхăр призерĕ Алексей Федяев поэт, Мускав хулин çулçӳревçи Владимир Останин параппанçă тата ыттисем те. Форума волонтерсем те йышлăн хутшăнчĕç.

Форум ертӳçи Наталия Повелайтес унта хутшăнакансенчен пĕрремĕш кунранах туслă команда йĕркеленнине палăртать – вĕсемпе ĕçлеме питĕ çăмăл пулнă. Кӳршĕри Мари Республикинчен, Чул хуларан килнĕ хăнасем питĕ нумай лайăх аса илӳ, культура тата искусство сферинчи паха манăçми опыта илсе кайнă – вак-тĕвек сувенир ăсталама вĕреннинчен пуçласа вокал ăсталăхĕ таранах.

■ ЕЛИЗАВЕТА ПЕТРОВА




● ÇИТĔНӲ

**ÇАК ЭРНЕРЕ СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔНЧИ «БЕЛЫЕ КАМНИ» ФИЗКУЛЬТУРĂПА СЫВЛĂХА ÇИРĔПЛЕТМЕЛЛИ ЦЕНТРТА** триатлон енĕпе иртнĕ республика чемпионачĕпе первенствинче Шупашкар районĕн спортсменĕсем лайăх кăтартупа палăрнă. 16-19, 13-14 çулсенчи çамрăксен тата хĕрарăмсемпе арçынсен ушкăнĕсенче пурĕ 70 яхăн спортсмен хăйĕн вăйне 300 тата 750 метр ишессинче, велосипедпа 8 тата 20 км, çуран 2 тата 5 км чупса тĕрĕсленĕ. Ăмăртăвăн çĕнтерӳçисемпе призерĕсене кашни тапхăртах балсен шутне кура палăртнă. 10-12 çулсенчи чи çамрăк спортсменсем Чăваш Республикин триатлон федерацийĕн кубокĕшĕн кĕрешнĕ. Вĕсем 100 метр тăршшĕне ишнĕ, велосипедпа 4 км парăнтарнă, 1 км чупнă.

Шупашкар район чысне Çатра-Хочехматри ача сачĕн заведующийĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Антонова, унăн хĕрĕ, Кӳкеç лицейĕн вĕренекенĕ Рената Чайникова тата Кӳкеçри 1-мĕш шкула çӳрекен Ростислав Кудрявцев хӳтĕленĕ. Хăйсен çул ӳсĕмĕсенче амăшĕпе хĕрĕ тĕрĕслевсем витĕр лайăх кăтартусемпе тухса пĕрремĕш вырăнсене йышăннă.



УТЕПЛЕНИЕ ДОМОВ
пустотелых стен, полов, чердаков
и мансард ПЕНОИЗОЛОМ И ЭКОВАТОЙ
☎ 8-919-669-16-66. СУПЕР СКИДКИ!!!
06-27

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аттене, кукаçине, Кивçурт Марка ялĕнче пурăнакан **Петр Михайлович ПАВЛОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр! Аттеçĕм, эпир сана питĕ юрататпăр, хисеплетпĕр! Аннепе пĕрле пире ăс панишĕн, ырра вĕрентнишĕн, ăнăçлă кун-çул сунса пурнăç çулĕ çине тăратнишĕн тав тăватпăр! Сана юхан шыв пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр! Санăн утас çулу яланах такăр та уçăмлă пултăр.

■ *Салампа мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата пĕчĕк мăнукĕ.*

07-12

● АВТОЧУПУ



**1,2 КМ ТĂРШШĔ АВĂК, ТУМХАХЛĂ ÇУЛ,** тăвайккине пĕрре хăпарса тепре чăнкă çырмана илсе тухать – иртнĕ канмалли кунсенче Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи Çырмапуç ялĕ çывăхĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕн Кубокĕшĕн иртнĕ автомобиль спорчĕн ăмăртăвне хутшăнакансен çакăн пек кăткăс, чăрмавлă трассăна парăнтармалла пулнă. Унăн программине кĕртнĕ кроспа ралли-спринтра чемпион ячĕшĕн республикăри тата кӳршĕ регионсенчен килнĕ 40 яхăн спортсмен вăй виçнĕ.

Двигатель виçине тата привода кура тĕрлĕ ушкăнсенче Шупашкар спортсменĕсем çĕнтерĕве уявланă, Хусан, Кирово-Чепецк та малти вырăнсенче пулнă. «Ирĕклĕ» класри ятарласа хатĕрленĕ спортавтопа вара Кӳкеç çынни Андрей Васильев **(сăн ӳкерчĕкре сылтăмри)** мала тухнă.

Кулăрaççĕ

☺ ☺ ☺

– Эпĕ чăнахах ватăлатăп иккен, – кулянать хĕрарăм.
– Мĕн пулчĕ тата?
– Çамрăксем автобусра вырăн пама пăрахрĕç.

ÇАНТАЛĂК

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

| | | |
|---|---|---|
| Кĕçнерникун ...Июль, 12 | +23° | +15° |
| Эрнекун ...Июль, 13 | +24° | +15° |
| Шăматкун ...Июль, 14 | +25° | +16° |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Июль | 15 | Вырсарникун.... | +27° |
| Июль | 16 | Тунтикун ......... | +28° |
| Июль | 17 | Ытларикун........ | +28° |
| Июль | 18 | Юнкун ............ | +30° |

валюта курсĕ 12.07.2018
$ 62,12
€ 72,84